[illegible]

1942 АПРЕЛЬ 4 ШАМАТКУН 79(6014) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе пысăк тухăçлăхпа тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ВКП(б) райкомĕсемпе ĕççынни депутачĕсен районсенчи Совечĕсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

43. **Чкаловски районри Кзыл-Чишме ялсоветĕнчи «Маяк» колхоз** (колхоз председателĕ З. Х. Минаев юлташ). Колхоз вăрлăхлăх тырра пур культурăсене те акма кирлĕ чухлĕ пĕтĕмпех хатĕрлесе хунă, вĕсене лайăх тасатнă, акма юрăхлă кондицие çитернĕ. Пăрçа-ясмăк вăрлăхне алăпа пĕрчĕн-пĕрчĕн суйласа илнĕ. Уйхире 2.069 лав тислĕк кăларнă, 12 центнер кĕл, 30 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрленĕ. Производствăллă плансемпе ĕç планĕсене туса хунă.

44. **Чкаловски районри Тăрăн ялсоветне кĕрекен Роза Люксембург ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕ **Н. П. Думилин** юлташ). Колхоз вăхăтра авăн çапса пĕтернĕ. Колхоз акмалли тырра пур культурăсем тĕлĕшпе те çуракинче кирлĕ чухлĕ йăлтах хатĕрленĕ, страховой фондсене тивĕçлĕ таран уйăрса хунă. Пăрçа-ясмăк вăрлăхне пĕтĕмĕшпех алăпа суйласа тасатса хунă. Пучахлă культурăсене пурне те триер витĕр кăларнă, акма юрăхлă кондицие çитернĕ. Ытти колхозсене улăштарса парас тĕлĕшпе çуртри вăрлăхĕсене 40 центнер ытла уйăрса хунă. Уя 1.900 лав тислĕк кăларнă. 12 центнер кĕл, 15 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хунă. Ялхуçалăх машинисене пĕтĕмпех юсаса пĕтернĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри çĕнĕ çитĕнÿсемшĕн

Паян эпир ЧАССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ «Чăваш АССР-ĕнчи колхозсенче çамрăк выльăхсене сыхласа усрамалли тата выльăх-чĕрлĕх хисепне ÿстермелли мерăсем çинчен» йышăннă постановление пичетлесе кăларатпăр. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă решенирен тухса тăракан çак постановлени республикăра 1942 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре калама çук пысăк вырăн йышăнса тăма тивĕçлĕ, вăл ĕнтĕ колхозсенчи выльăхсен хисепне нихăçанхи пек мар ÿстерме пулăшĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе йышăннă мерăсене пула, уйрăмăнах выльăхсен продуктивноçне ÿстернĕшĕн ĕçлĕве хушса тÿлемелле тунине пула, выльăх апачĕн базине ÿстернĕ никĕс çинче 1941 çулта республикăри колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç пур йышши продуктивлă выльăхсем енĕпе те малалла ÿссе пычĕ. Майракаллă шултра выльăхсен хисепĕ 1941 çулта республикăри колхозсенче 21,1 процент, вăл шутра ĕнесен хисепĕ 16,2 процент, сурăхсемпе качакасен хисепĕ 28,8 процент тата сыснасен хисепĕ 34,2 процент ÿсрĕ. Уйрăмăнах Элĕк районĕ пысăк çитĕнÿсем турĕ. Унта майракаллă шултра выльăхсен хисепĕ 45,2 процент, сыснасен хисепĕ 31,8 процент, качакасемпе сурăхсен хисепĕ 54,8 процент ÿснĕ. Ку тĕлĕшпе çавăн пекех Çĕмĕрле, Вăрнар районĕсем те начар мар ĕçлерĕç. Республикăри колхозсем иртнĕ çулта выльăх апачĕн базине вăйлатрĕç, шултра апатсемпе силос ытларах туса хатĕрлерĕç. Анчах юлса пыракан районсем те пулчĕç. Куславкка, Кувакино, Çĕрпÿ районĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана тултараймарĕç, начар пăхса усранă пирки вĕсен çамрăк выльăхсем чылай вилсе пĕтрĕç. Сăмахран, Куславкка районĕнче пăрусен пĕтĕм хисепĕнчен 17,1 процентĕ, сысна çурисем 20,5 процент, путексем 20,5 процент чухлĕ вилсе пĕтнĕ.

«Выльăхсен шутне ÿстерес тĕлĕшпе çамрăк выльăхсемпе начар усă курни каличчченех выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри пысăк çитменлĕх пулса юлать,—тесе палăртрĕç ЧАССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ хăйсен постановленийĕнче.—Çапла, 1940 çулта колхозсенче илнĕ мĕнпур çамрăк пăрусен 81 процентĕ тата путексен 75 процентĕ кăна выльăх-чĕрлĕх хисепне йышлатас ĕçе кайнă, ытти çамрăк выльăхсене вара салатса, пусса пĕтернĕ е вĕсене начар пăхнă пирки вĕсем вилсе пĕтнĕ, çав вăхăтрах çамрăк выльăхсен чылай пысăк пайĕ выльăх-чĕрлĕх хисепне ÿстерес ĕçе кайма пултарнă».

ЧАССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ партипе совет вырăнсенчи оргăнĕсене выльăх-чĕрлĕх хисепне ÿстерессишĕн вăйлăн кĕрешме хушса хăварчĕç. Колхозсенчи, колхозниксемпе рабочисен тата служащисен килĕсенчи çамрăк выльăхсене пĕтĕмпех сыхласа усрамалла, выльăхсене салатса ярас е пусса пĕтерес практикăна тĕп тумалла, выльăхсем хĕсĕр çÿрени пулмалла мар.

1942 çулта пирĕн умра колхозсенчи выльăхсен хисепне ÿстерес тĕлĕшпе пысăк задачăсем тăраççĕ. Çÿлте асăннă постановленире палăртнă тăрăх, 1943 çулти январĕн пĕрремĕш тĕлне республикăра майракаллă шултра выльăхсен хисепне 80.000 пуçа çитермелле, колхозниксен килĕсенче 1942 çулта 58.800 пăру пăхса ÿстермелле. Лашасен хисепĕ 107.000 пуçа çитмелле, ĕçлекен вăкăрсен хисепĕ 1.500 пуç пулмалла, сурăхсемпе качакасен хисепĕ 120.000 пуçа çитмелле, сыснасен хисепне 90.000 пуçа çитермелле, кроликсен хисепне 5.000 пуçа тата кайăк-кĕшĕксен хисепне 300.000 пуçа çитермелле.

Çапла вара, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç кăçал пысăк хăвăртлăхсемпе тата анлăн пулса пыма тивĕç. Государство панă çак плана пирĕн кирек мĕнле пулсан та пурнăçа кĕртмеллех, çав тĕлĕшпе вара чылай паха мероприятисене туса ирттермелле пулать. Вăл мерăсене СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн постановленинче тата ЧАССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ йышăннă постановленире уççăн кăтартса панă.

Чи малтанах, колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх фермисене комплектлама çамрăк выльăхсене малтанах контрактацилесе, колхозниксенчен, рабочисенчен тата служащисенчен сутăн илес ĕçе тĕплĕн организацилемелле. Ку ĕçе ĕнтĕ чылай районсем анăçлăн туса пыраççĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕ çамрăк выльăхсем контрактацилес плана ытлашшипех тултарса пырать.

Выльăх-чĕрлĕхсен хисепĕ хăвăрт ÿссе пытăр тата колхозсемпе колхозниксем обществăллă выльăх-чĕрлĕхрен пысăк тупăш илччĕр тесен, çамрăк выльăхсене пусас тата сутас йăлана пăрахмалла. Усăнах брак пулса тăракан çамрăк выльăхсене çеç, райçĕрĕç пайĕн ветеринарĕ е зоотехникĕ браклана хыççăн, пусма е сутма юрать. Совнаркомпа ВКП(б) Обкомĕ колхозниксене те хăйсен çамрăк выльăхĕсене пусмасăр тăма, вĕсене колхоза сутма сĕнеççĕ. Колхозсенчи обществăллă выльăх-чĕрлĕхе салатса ярассине пĕтерес шутпа, партипе правительство çакăн пек йĕрке турĕç: ÿссе çитнĕ выльăхсене вăрçă вăхăтĕнче райçĕрĕç пайĕ ирĕк панă хыççăн çеç пусма е сутма юрать.

Колхоз валли çамрăк выльăхсене ÿстерсе панăшăн, çÿлте асăннă постановлени тăрăх, колхозника укçан тÿленисĕр пуçне, натурăпа тÿлемелли йĕрке тунă. Çакă вара колхозниксен çамрăк выльăх ÿстерсе колхоза сутас кăмăлне хавхалантарса пымалла.

Выльăхсен хисепне хăвăрт ÿстермелли мерăсенчен пĕри вăл — выльăхсене çулталăкра темиçе хут пĕтĕлентерни пулса тăрать. Малта пыракансен опычĕ çак ĕç калама çук паха мероприяти пулнине кăтартса пачĕ.

ЧАССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обком бюровĕн постановленийĕнче выльăхсене искусственнăй майпа пĕтĕлентерес ĕç çине уйрăмăнах çавăрăнса пăхнă. Ку тĕлĕшпе пысăк план палăртса хăварнă: 1942 çулта 5.000 кĕсрене, 16.000 ĕнене тата ытти выльăхсене те искусственнăй майпа пĕтĕлентермелле. Çак плана пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе çĕрĕç органĕсен пĕтĕм вăя хурса кĕрешмелле пулать.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана пурнăçлассишĕн кĕрешме хавхалантарас тесе, Совнаркомпа ВКП(б) Обкомĕ райçĕрĕç пайĕсен работникĕсене премисем памалла тунă.

Çапла ĕнтĕ, выльăх ĕрчетес ĕçе çĕнĕ вăйпа туса пыма пур условисене те туса панă.

Çĕршыв тата пуринчен ытла Хĕрлĕ Çар халĕ выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене ытларах ыйтнине тивĕçтерес тесе, пирĕн колхозсемпе колхозниксен çак постановление пурнăçа кĕртессишĕн большевикла кĕрешсе пырас пулать. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ÿстернĕшĕн колхозниксене ĕçшĕн хушса тÿлемелли çинчен» йышăннă постановление пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пырас пулать. Выльăх-чĕрлĕхсене усрамалли çуртйĕрсене кирлĕ таранах туса хатĕрлени кирлĕ. Выльăх апачĕсен ресурсĕсене ÿстерсе пымалла, вĕсене перекетлĕн тыткаламалла. Çапла вара, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пысăк çитĕнÿсем туса районри выставкăра пулма, республикăри хаçатсенчи Хисеп хăмине кĕме тата куçса çÿрекен хĕрлĕ ялава илме тивĕçлĕ пулассишĕн кĕрешмелле.

Чăваш АСС Республикинчи колхозсенче çамрăк выльăхсене сыхласа усрамалли тата выльăх-чĕрлĕх хисепне ÿстермелли мерăсем çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ йышăннă постановлени

Çĕршыв тата пуринчен малтан Хĕрлĕ Çар выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене ытларах ыйтнине шута илсе, çавăн пекех тата ССР Союзĕн облаçĕсемпе республикисен пĕр пайне нимĕç захватчикĕсем вăхăтлăха оккупациленĕ пирки выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç тунă çухатăва витме кирлине шута илсе, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Колхозсемпе совхозсенче çамрăк выльăхсене сыхласа усрамалли тата выльăх-чĕрлĕх хисепне ÿстермелли мерăсем çинчен» хăйсем йышăннă постановленире 1942 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе уйрăмăнах пысăк вырăна хурса хакларĕç.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ çакна палăртаççĕ: выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине вăйлатас тĕлĕшпе йышăннă мерăсене пула, выльăх апачĕн базине ÿстернине пула, 1941 çулта республикăри колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç пур йышши продуктивлă выльăхсем енĕпе те малалла ÿссе пычĕ. Майракаллă шултра выльăхсен хисепĕ 1941 çулта колхозсенче 21,1 процент, ĕнесен хисепĕ 16,2 процент, сурăхсемпе качакасен хисепĕ 28,8 процент тата сыснасен хисепĕ 34,2 процент ÿсрĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре çак районсем çитĕнÿсем турĕç: Элĕк районĕ, унта майракаллă шултра выльăхсен хисепĕ 45,2 процент, сыснасен хисепĕ 31,8 процент, качакасемпе сурăхсен хисепĕ 54,8 процент ÿснĕ; Çĕмĕрле районĕ, унта майракаллă шултра выльăхсен хисепĕ 19,6 процент, сыснасен — 42,2 процент, качакасемпе сурăхсен — 35,7 процент ÿснĕ; Вăрнар районĕ, унта майракаллă шултра выльăхсен хисепĕ 22,5 процент, сыснасен — 15,9 процент, сурăхсен — 39,1 процент ÿснĕ. Республикăри колхозсем 1941 çулта выльăх апачĕн базине ÿстерчĕç, 1940 çултипе танлаштарсан 15,7 процент ытларах шултра апатсем пухса хатĕрлерĕç силос ытларах хатĕрлерĕç. Çав вăхăтрах чылай районсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре халичченех юлса пыраççĕ-ха. Çапла, Куславкка районĕнче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне майракаллă шултра выльăхсем енĕпе 90 процент, сыснасем енĕпе —69 процент, сурăхсемпе качакасем енĕпе—80 процент тултарнă, начар пăхса усранă пирки 1941 çулта пăрусем 17,1 процент, сысна çурисем — 20,5 процент тата путексем — 20,5 процент вилсе пĕтнĕ. Кувакино районĕнче плана майракаллă шултра выльăхсем енĕпе 83,8 процент, сыснасем енĕпе — 73 процент, сурăхсемпе качакасем енĕпе — 84,5 процент тултарнă, пăрусем 11 процент, путексем — 10 процент чухлĕ вилнĕ. Çĕрпÿ районĕнче плана майракаллă шултра выльăхсем енĕпе 83 процент, сыснасем енĕпе 82 процент, сурăхсемпе качакасем енĕпе 72 процент тултарнă, пăрусем 7 процент, сысна çурисем 16,7 процент, путексем 14 процент чухлĕ вилсе пĕтнĕ.

Выльăхсен шутне ÿстерес тĕлĕшпе çамрăк выльăхсемпе начар усă курни халиччченех выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри пысăк çитменлĕх пулса юлать. Çапла, 1940 çулта колхозсенче илнĕ мĕнпур çамрăк пăрусен 81 процентĕ тата путексен 75 процентĕ кăна выльăх-чĕрлĕх хисепне йышлатас ĕçе кайнă, ытти çамрăк выльăхсене вара салатса, пусса пĕтернĕ е вĕсене начар пăхнă пирки вĕсем вилсе пĕтнĕ, çав вăхăтрах çамрăк выльăхсен чылай пысăк пайĕ выльăх-чĕрлĕх хисепне ÿстерес ĕçе кайма пултарнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ партипе совет органĕсене выльăх-чĕрлĕхсен хисепне чылаях ÿстерес ĕçе çирĕппĕн пурнăçа кĕртме хушаççĕ, çавăнпа та колхозсенчи, çавăн пекех тата колхозниксен, рабочисен тата служащисен килĕсенчи çамрăк выльăхсене пĕтĕмпех сыхласа усрамалла, колхозсенче выльăхсене салатса ярас практикăна пĕтермелле, ама выльăхсем хĕсĕр çÿрессине пĕтермелле, выльăх апачĕсене кирлĕ чухлĕ хатĕрлесе пымалла тата çарансемпе май пур таранах усă курмалла.

Колхозсенче 1942 çулта выльăх-чĕрлĕхсен хисепне ÿстерес тата çамрăк выльăхсене пĕтĕмпех сыхласа усрас шутпа, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă постановлени тăрăх, Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ çапла йышăнаççĕ:

I. Майракаллă шултра выльăхсем енĕпе

1. 1943 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне колхозсенчи майракаллă шултра выльăхсен хисепне, 1942 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне 56.681 пуç пулнине вырăнне 80.000 пуçа çитермелле тăвас, вăл шутра ĕнесен хисепĕ 25.000 пуçа çитмелле; 1942 çулта колхозниксен килĕсенче майракаллă çамрăк выльăхсене 58.000 пуç чухлĕ çитĕнтерсе ÿстермелле тăвас, çак шута колхозсен фермисене комплектлама сутакан тата ĕнесĕр колхозниксене сутакан çамрăк выльăхсем те кĕреççĕ. Ку тĕлĕшпе районсем тăрăх çакăн пек план палăртса хурас:

Районсем	Колхозсенче: Майракаллă шултра выльăхсем 1943 ç. январĕн 1-мĕш тĕлне	Колхозсенче: Вăл шутра ĕнесем	Колхозниксен килĕсенче: 1942 çулта çамрăк выльăхсем ÿстермелле
Улатăр	2600	720	2200
Элĕк	3060	950	2100
Вăрнар	2830	880	1900
Йĕпреç	1980	630	1550
Ишлей	3400	1150	2400
Калинински	2600	810	1800
Канаш	2500	780	2100
Куславкка	2760	970	1700
Комсомольски	2700	850	2000
Кувакино	2300	530	1600
Хĕрлĕ Чутай	3800	1250	3500
Сĕнтĕрвăрри	2100	700	1750
Октябрьски	2600	910	1800
Пăрачкав	3250	920	2100
Советски	2800	880	2100
Сĕнтĕр	5000	1600	2550
Первомайски	1900	600	1800
Красноармейски	3050	950	2050
Вăрмар	3250	900	2200
Çĕрпÿ	3000	1100	2550
Шупашкар	3000	1100	2100
Чкаловски	2400	740	1700
Шăмăршă	2050	680	1550
Шăхасан	3150	900	2550.
Çĕмĕрле	2400	660	2100
Етĕрне	3100	900	2000
Елчĕк	3400	1000	2200
Тăвай	2900	900	1950
Шупашкар хули	120	40	150

2. 1942 çулта колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх фермисене комплектлама майракаллă çамрăк выльăхсене малтанах контрактацилесе колхозниксенчен, рабочисенчен тата служащисенчен сутăн илессин планне 25.000 пуç чухлĕ палăртса хурас. Çак цифрăна районсем тăрăх çапла валеççе парас:

Улатăр	800
Элĕк	1100
Вăрнар	600
Йĕпреç	600
Ишлей	1000
Калинински	600
Канаш	1150
Куславкка	800
Комсомольски	950
Кувакино	950
Хĕрлĕ Чутай	850
Сĕнтĕрвăрри	700
Октябрьски	800
Пăрачкав	1200
Советски	900
Сĕнтĕр	800
Первомайски	700
Красноармейски	1000
Вăрмар	1350
Çĕрпÿ	1200
Шупашкар	800
Чкаловски	900
Шăмăршă	700
Шăхасан	1300
Çĕмĕрле	600
Етĕрне	650
Елчĕк	1200
Тăвай	750
Шупашкар хули	50

3. Выльăх-чĕрлĕхсен хисепĕ хăвăрт ÿсмелле тăвас тата колхозсемпе колхозниксем обществăллă выльăх-чĕрлĕхрен илекен тупăша ÿстерес шутпа, колхозсене майракаллă шултра выльăхсен пĕр çула çитмен çамрăк выльăхĕсене пусмасăр тата сутмасăр тăма хушас, усăсăр брак пулса тăракан çамрăк выльăхсене кăна, вĕсене райçĕрĕç пайĕн ветеринарипе зоотехника работникĕсем браклана хыççăн, пусма е сутма юрать.

4. Колхозниксене майракаллă шултра выльăхсен пĕр çула çитмен çамрăк выльăхĕсене пусмасăр тăма сĕнес, вăл выльăхсене колхоза тата ĕнесĕр колхозниксене сутмашкăн, çавăн пекех тата нумайрах вăхăт иртнĕ хыççăн хăйсем валли аш-какай тума пусмашкăн сыхласа хăвармалла.

5. Колхозсенче обществăллă выльăх-чĕрлĕхе салатса ярассине пĕтерес шутпа, çакăн пек йĕрке тăвас: ÿссе çитнĕ выльăхсене пусас тата сутас ĕçе вăрçă вăхăтĕнче райçĕрĕç пайĕ ирĕк панă хыççăн çеç тума юрать, вĕсене ирĕксĕрех пусма лекнĕ чухне çеç райçĕрĕç пайĕн килĕшĕвĕсĕр пусма пулать.

6. Çакăн пек йĕрке тăвас: майракаллă шултра выльăхсен колхоз валли ултă уйăхран пуçласа пĕр çула çитиччен ÿстерсе панă кашни çамрăк выльăхĕшĕн колхознике, çавăн пекех тата яллă вырăнсемпе хуласенче пурăнакан рабочисемпе служащисене государствăн хатĕрлев хакĕсем тăрăх укçа тÿлеççĕ, унсăр пуçне, пĕрлешÿллĕ пуху йышăннă тăрăх, çамрăк выльăх сутакан хуçалăха аш-какай поставки енĕпе панă обязательствăна пурнăçа кĕртессине колхоз хăй çине илме пултарать, анчах та çав обязательствăн хисепĕ колхозникĕн килĕ валли çулталăклăх панă поставка норминчен ытла пулмалла мар. Çамрăк выльăх сутакан хуçалăха укçа тÿленисĕр пуçне, сутнă çамрăк выльăхăн пахалăхне шута илсе, колхоз фондĕнчен кашни выльăхшăн çур центнертан пуçласа пĕр центнера çити тĕштырă е 5 центнертан пуçласа 10 центнера çити шултра апатсем пама пултараççĕ.

7. Колхозсемпе колхозниксен килĕсенче ĕнесене искусственнăй майпа пĕтĕлентерес плана, 1941 çулта пĕтĕлентернĕ 7.900 пуç вырăнне, 16.000 пуç чухлĕ палăртса хурас. Çак цифрăна районсем тăрăх çакăн пек валеççе парас:

Улатăр	1100
Элĕк	300
Вăрнар	1200
Йĕпреç	500
Ишлей	300
Калинински	1100
Канаш	740
Куславкка	200
Комсомольски	250
Кувакино	530
Хĕрлĕ Чутай	1500
Сĕнтĕрвăрри	280
Октябрьски	390
Пăрачкав	650
Советски	150
Сĕнтĕр	300
Первомайски	350
Красноармейски	150
Вăрмар	820
Çĕрпÿ	1000
Шупашкар	290
Чкаловски	250
Шăмăршă	250
Шăхасан	1180
Çĕмĕрле	850
Етĕрне	370
Елчĕк	300
Тăвай	700
Шупашкар хули	—

8. Майракаллă шултра выльăхсене искусственнăй майпа пĕтĕлентерекен пунктсенче ĕçлекен колхозниксене, искусственнăй майпа пĕтĕлентермелли плана пурнăçа кĕртнине тата ĕнесем мĕн чухлĕ пĕтĕленнине шута илсе, 1942 çултан пуçласа (республика бюджетĕнчен) çакăн чухлĕ премисем памалла тăвас:

Искусственнăй майпа пĕтĕлентернĕ ĕнесем пĕтĕленнин процентĕ	Пĕтĕленнĕ кашни ĕнешĕн тÿлемелле: Пĕтĕлентерекен технике	Пĕтĕленнĕ кашни ĕнешĕн тÿлемелле: Скотнике
90 процентран пуçласа 95 проц. çити	1 тенкĕ	50 пус
95 процентран ытларах пулсан	3 тенкĕ те 50 пус	1 тенкĕ

II. Сурăхсемпе качакасем ĕрчетес енĕпе

9. 1943 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне сурăхсемпе качакасен хисепне, 1942 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне 68.170 пуç пулнине вырăнне, 120.000 пуçа çитермелле тăвас; сурăхсемпе качакасен путеккисене 1942 çулта колхозниксен килĕсенче 140.000 пуçа çитерес, çак шута колхозсен сурăх фермисене комплектлама колхозсене сутакан путексем те кĕреççĕ. Çак цифрăна районсем тăрăх çакăн пек валеççе парас:

Районсем	Колхозсенче: Сурăхсемпе качакасем 1943 ç. январĕн 1-мĕш тĕлне	Колхозниксен килĕсенче: 1942 çулта сурăхсемпе качакасен путеккисене ÿстермелле
Улатăр	3600	3680
Элĕк	5400	5280
Вăрнар	4400	4500
Йĕпреç	2500	3900
Ишлей	5900	5950
Калинински	4350	4800
Канаш	3850	4950
Куславкка	3900	3950
Комсомольски	4900	4650
Кувакино	3550	3900
Хĕрлĕ Чутай	4800	6800
Сĕнтĕрвăрри	2700	3850
Октябрьски	3800	5100
Пăрачкав	4500	5350
Советски	6500	5250
Сĕнтĕр	5750	6200
Первомайски	3200	4140
Красноармейски	4850	4800
Вăрмар	4800	6600
Çĕрпÿ	4200	6550
Шупашкар	4800	5250
Чкаловски	4350	4900
Шăмăршă	3550	3800
Шăхасан	4750	5800
Çĕмĕрле	2600	3900
Етĕрне	3400	4600
Елчĕк	4650	5600
Тăвай	3950	4700
Шупашкар хули	100	250

10. 1942 çулта колхозсен сурăх фермисене комплектлама сурăхсемпе качакасене колхозсенчен, рабочисенчен тата служащисенчен сутăн илес плана 30.000 пуç чухлĕ хисеппе çирĕплетсе хăварас. Çак цифрăна районсем тăрăх çапла валеççе парас:

Улатăр	1200
Элĕк	1500
Вăрнар	700
Йĕпреç	1000
Ишлей	800
Калинински	700
Канаш	1300
Куславкка	750
Комсомольски	1100
Кувакино	1200
Хĕрлĕ Чутай	700
Сĕнтĕрвăрри	1000
Октябрьски	1100
Пăрачкав	1800
Советски	800
Сĕнтĕр	1000
Первомайски	800
Красноармейски	1500
Вăрмар	1500
Çĕрпÿ	1500
Шупашкар	800
Чкаловски	800
Шăмăршă	800
Шăхасан	1500
Çĕмĕрле	800
Етĕрне	1000
Елчĕк	1200
Тăвай	1000
Шупашкар хули	150

11. Çакăн пек йĕрке тăвас: сурăх фермине комплектлама колхоза сутнă пилĕк уйăхран иртнĕ кашни сурăхшăн е качакашăн колхознике, çавăн пекех тата яллă вырăнсемпе хуласенче пурăнакан рабочие е служащие, выльăхăн чĕрĕ чухнехи йывăрăшне шута илсе, государствăн хатĕрлев хакĕсемпе тÿлеççĕ, укçан тÿлени çумне хушса, сутнă выльăхăн пахалăхне шута илсе, колхозăн пĕрлешÿллĕ пухăвĕ йышăннă тăрăх, кашни выльăхшăн 10 килограмран пуçласа 15 килограма çити тĕштырă е çур центнертан пуçласа 1,5 центнера çити хисеппе шултра апат колхоз фондĕнчен тÿлеççĕ.

12. Колхозсене пĕр çултан çамрăкрах такасене аш-какай тума пусмасăр тăма сĕнес, çав такасене, ытларах аш-какай тата çăм илес тесе, икĕ-виçĕ çула çитиччен тытса усрамалла, ку шута кĕрĕк тума ĕрчетекен сурăхсем кĕмеççĕ.

13. Колхозсенче тата колхозниксен килĕсенче 1942 çулта сурăхсемпе качакасене искусственнăй майпа пĕтĕлентермелли плана, 1941 çулта пĕтĕлентернĕ 12.525 пуç вырăнне, 60.000 пуçран кая мар пулмалла туса палăртса хурас; ăна районсем тăрăх çакăн пек валеççе парас:

Улатăр	2500
Элĕк	800
Вăрнар	6150
Йĕпреç	1200
Ишлей	1000
Калинински	5350
Канаш	2200
Куславкка	1200
Комсомольски	580
Кувакино	1700
Хĕрлĕ Чутай	4700
Сĕнтĕрвăрри	700
Октябрьски	1200
Пăрачкав	1300
Советски	600
Сĕнтĕр	1200
Первомайски	1200
Красноармейски	800
Вăрмар	2400
Çĕрпÿ	5750
Шупашкар	1300
Чкаловски	1200
Шăмăршă	1000
Шăхасан	4060
Çĕмĕрле	1660
Етĕрне	2100
Елчĕк	1850
Тăвай	4300
Шупашкар хули	—

14. Сурăхсемпе качакасене искусственнăй майпа пĕтĕлентерекен пунктсенче ĕçлекен колхозниксене, пĕтĕлентермелли плана тултарнине тата сурăхсемпе качакасем пăрамланине шута илсе, 1942 çултан пуçласа (республика бюджетĕнчен) çакăн чухлĕ премисем памалла тăвас:

Юлашки 2-мĕш страницăра

Чăваш АСС Республикинчи колхозсенче çамрăк выльăхсене сыхласа усрамалли тата выльăх-чĕрлĕх хисепне ÿстермелли мерăсем çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ йышăннă постановлени

(Ю Л А Ш К И)

Искусственнăй майпа пĕтĕлентернĕ сурăхсемпе качакасем пăрамланин процентнĕ	Пăрамланă кашни сурăхпа качакашăн тÿлемелле	
	Пĕтĕлентерекен техника	Чабана
95 процентран пуçласа 98 процента çити	20 пус	10 пус
98 процентран ытларах пулсан	55 пус	15 пус

15. Малта пыракан колхозсем сурăхсене пĕр хут кăна мар пĕтĕлентерсе пулессем илнин опытне шута илсе, выльăхсен хисепне ÿстерес шутпа колхозсемпе колхозниксене сурăхсене çулталăкра темиçе хут пĕтĕлентермелле тума сĕнес.

III. Сыснасем ĕрчетес енĕпе

16. 1943 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне сыснасен хисепне колхозсенче, 1942 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне 69.000 пуç пулни вырăнне, 90.000 пуçа çитерес; районсем тăрăх çакăн пек план палăртса парас:

Улатăр	2400
Элĕк	4800
Вăрнар	3500
Йĕпреç	2300
Ишлей	3500
Калинински	3200
Канаш	3000
Куславкка	2600
Комсомольски	3300
Кувакино	2540
Хĕрлĕ Чутай	2500
Сĕнтĕрвăрри	2000
Октябрьски	3250
Пăрачкав	3500
Советски	4100
Сĕнтĕр	4700
Первомайски	2150
Красноармейски	4600
Вăрмар	3200
Çĕрпÿ	5100
Шупашкар	3100
Чкаловски	2600
Шăмăршă	2250
Шăхасан	4500
Çĕмĕрле	1800
Етĕрне	2500
Елчĕк	4400
Тăвай	3050
Шупашкар хули	160

17. Колхозсенче колхозниксенчен, рабочисемпе служащисенчен колхозсен сысна фермисене комплектлама сысна çурисемпе сыснасем 4.100 пуç сутăн илмелле тăвас. Çак цифрăна районсем тăрăх çакăн пек валеçсе парас:

Улатăр	100 пуç
Элĕк	60 »
Вăрнар	—
Йĕпреç	200 »
Ишлей	450 »
Калинински	100 »
Канаш	50 »
Куславкка	—
Комсомольски	—
Кувакино	—
Хĕрлĕ Чутай	300 »
Сĕнтĕрвăрри	250 »
Октябрьски	100 »
Пăрачкав	200 »
Советски	60 »
Сĕнтĕр	150 »
Первомайски	100 »
Красноармейски	150 »
Вăрмар	100 »
Çĕрпÿ	350 »
Шупашкар р.	100 »
Чкаловски	250 »
Шăмăршă	80 »
Шăхасан	300 »
Çĕмĕрле	200 »
Етĕрне	200 »
Елчĕк	250 »
Тăвай	—
Шупашкар хули	—

18. Сыснасем ĕрчетессине вăйлатас шутпа колхозсемпе колхозниксене сысна амисене çулталăкне икĕ хут çăвăрлаттармалла тума сĕнес.

19. Сысна фермисĕр колхоз пулмалла мар тесе шутласа, райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсене 1942 çулта кашни колхозра сысна ферми организацилессине пурнăçа кĕртме хушас.

IV. Лашасем енĕпе

20. 1943 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне колхозсенчи лашасен хисепне 107 пин пуçа çитермелле тăвас, çак плана районсем тăрăх çакăн пек валеçсе парас:

Улатăр	2424 пуç
Элĕк	2278 »
Вăрнар	3916 »
Йĕпреç	3059 »
Ишлей	4321 »
Калинински	4422 »
Канаш	4047 »
Куславкка	3183 »
Комсомольски	3301 »
Кувакино	2072 »
Хĕрлĕ Чутай	4202 »
Сĕнтĕрвăрри	2886 »
Октябрьски	3830 »
Пăрачкав	2920 »
Советски	4630 »
Сĕнтĕр	5732 »
Первомайски	2813 »
Красноармейски	5891 »
Вăрмар	3571 »
Çĕрпÿ	5372 »
Шупашкар	3716 »
Чкаловски	3024 »
Шăмăршă	2744 »
Шăхасан	5037 »
Çĕмĕрле	2901 »
Етĕрне	4008 »
Елчĕк	5378 »
Тăвай	4255 »
Шупашкар хули	167 »

21. 1942 çулта колхозсенче кĕсресене искусственнăй майпа пĕтĕлентермелли плана, 1941 çулта пĕтĕлентернĕ 4.522 пуç вырăнне, 5 пин пуçран кая мар пулмалла туса çирĕплетес. Çак плана районсем тăрăх çакăн пек валеçсе парас:

Улатăр	—
Элĕк	270
Вăрнар	545
Йĕпреç	270
Ишлей	135
Калинински	270
Канаш	—
Куславкка	135
Комсомольски	135
Кувакино	135
Хĕрлĕ Чутай	270
Сĕнтĕрвăрри	—
Октябрьски	270
Пăрачкав	270
Советски	135
Сĕнтĕр	135
Первомайски	135
Красноармейски	405
Вăрмар	135
Çĕрпÿ	135
Шупашкар	—
Чкаловски	135
Шăмăршă	135
Шăхасан	405
Çĕмĕрле	135
Етĕрне	135
Елчĕк	135
Тăвай	135
Шупашкар хули	—

22. Чăваш АССР Çĕр-ĕç Халăх Комиссариатне çапла тума хушас: 1942 çулта искусственнăй майпа пĕтĕлентерме государство заводĕсен витисенчи мĕнпур йĕкĕрсенчен 60 процентнĕпе усă курмалла.

23. Кĕсресене искусственнăй майпа пĕтĕлентерекен пунктсенче ĕçлекен колхозниксене (республика бюджетĕнчен), искусственнăй майпа пĕтĕлентермелли плана тултарнине шута илсе, 1942 çултан пуçласа çакăн пек хисепле премисем памалла тăвас:

Искусственнăй майпа пĕтĕленнĕ кĕсресен процентнĕ	Пĕтĕ кашни кĕсрешĕн тÿлемелле	
	Пĕтĕлентерекен техника	Конюха
65 процентран пуçласа 75 процента çити	3 т. 50 пус	1 т. 00 пус.
75 процентран пуçласа 85 процента çити	10 т. 00 пус	3 т. 50 пус.
85 процентран ытларах пулсан	17 т. 50 пус	5т. 00 пус.

24. Чăваш АССР Çĕр-ĕç Халăх Комиссариатне çапла тума хушас: 1942 çулти чуптару кампанийĕ вăхăтĕнче Засурски лаша заводĕнче заводăн кĕсрисене, çавăн пекех тата таврари колхозсен кĕсрисене пĕтĕлентерме те, кĕсресене искусственнăй майпа пĕтĕлентермелли пункт организацилемелле.

25. Çакăн пек йĕрке тăвас: колхозсенче лашасене браклассине колхоз председателĕнчен, ветеринари врачĕнчен (фельдшерĕнчен) тата райçĕрĕç пайĕнчи е участокри зоотехникран тăракан ветеринарно-зоотехнически комисси пăхнă хыççăн кăна тата çав комиссин актне райисполком çирĕплетнĕ хыççăн кăна туса ирттермелле.

26. Ăратлă лашасен хисепне сыхласа усрас тата кĕсресене тĕрĕс тĕкелех хăмлаттармалла тăвас шутпа, государствăн республикăри тата районсенчи ăратлă выльăхсен кĕнекисем çине çырса хунă пур лашасене те, çавăн пекех тата пĕтĕ кĕсресене пурне те, гужповинноçран тата çулйĕр ĕçĕсенчен хăтарас.

V. Ĕçлекен вăкăрсем çинчен

27. 1943 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне колхозсенчи ĕçлекен вăкăрсен хисепне 1.500 пуçа çити ÿстермелле тăвас; çакна ăна районсем тăрăх çакăн пек валеçсе парас:

Улатăр	75 пуç
Элĕк	55 »
Вăрнар	50 »
Йĕпреç	45 »
Ишлей	45 »
Калинински	55 »
Канаш	50 »
Куславкка	50 »
Комсомольски	60 »
Кувакино	80 »
Хĕрлĕ Чутай	45 »
Сĕнтĕрвăрри	35 »
Октябрьски	35 »
Пăрачкав	80 »
Советски	40 »
Сĕнтĕр	45 »
Первомайски	30 »
Красноармейски	60 »
Вăрмар	60 »
Çĕрпÿ	60 »
Шупашкар	45 »
Чкаловски	60 »
Шăмăршă	50 »
Шăхасан	45 »
Çĕмĕрле	55 »
Етĕрне	60 »
Елчĕк	70 »
Тăвай	60 »
Шупашкар хули	—

28. Колхозсене çакăн пек сĕнÿ парас: 1941 тата 1940 çулсенче çуралнă вăкăрсен пĕтĕм хисепне, вĕсемпе ĕнесене чуптарас ĕçре усă курмасăр пулсан, ĕçлекен вăкăрсем туса ÿстерме сыхласа хăвармалла. Ĕçлекен вăкăрсем пăхса çитĕнтермешкĕн вăкăр-пăрусене 8—10 уйăха çитсен контрактацилемелле.

29. Республикăри «Заготскот» конторине тата Наркоммясомолпромăн самăртмалли пунктĕсене «Заготскот» базисемпе самăртмалли пунктсенче тăракан кастарнă çамрăк вăкăрсемпе ÿссе çитнĕ вăкăрсене колхозсенчи браклама палăртнă ытти тĕрлĕ выльăхсемпе пĕр чăрмавсăр улăштарма хушас. Кун пек чухне улăштаракан выльăхсем мĕн чухлĕ самăррине тата вĕсем сĕнле пахалăхлине çирĕплетнĕ эквивалент тăрăх шута илмелле.

30. Колхозсене çакăн пек тума сĕнес:

а) кастарнă вăкăрсене тата ытти вăкăрсене те пăхса усрама, вĕсене ĕçе вĕрентме бригадăра е колхозра ялан ĕçлекен колхозникĕ уйăрмалла, ăна конюхсем илекен ĕçкунĕсенчен сахал мар ĕçкунĕсем парса тăмалла;

б) кастарнă вăкăрсене тата ытти вăкăрсене пăхса усракан колхознике, колхозăн пĕрлешÿллĕ пухăвĕ йышăннă тăрăх, ĕçе вĕрентнĕ кашни вăкăршăн 15 тенкĕрен пуçласа 25 тенке çити хушса тÿлемелле.

VI. Кроликсемпе кайăк-кĕшĕксем ĕрчетес енĕпе

31. 1943 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне колхозсенчи ама кроликсен хисепне 5 пин пуçа тата ÿснĕ кайăк-кĕшĕксен хисепне 300 пин пуçа çитермелле тăвас, Чăваш АССР Çĕр-ĕç Халăх Комиссариачĕн кайăк-кĕшĕк ĕрчетмелли инкубатор станцийĕсенчен 480 пин чĕпĕ сутма планпа пăхса хурас, вăл шутран колхозсене 420 пин пуç сутмалла тăвас; çак цифрăсене районсем тăрăх çакăн пек валеçсе парас:

Районсем	1943 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне ама кроликсем пулмалла	1943 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне ÿссе çитнĕ кайăк-кĕшĕксем пулмалла	Кайăк-кĕшĕксем ĕрчетмелли инкубатор станцийĕсенчен чĕпĕсем сутмалла	
			Пĕтĕмпе	Вăл шутра колхозсене
Улатăр	80	8650	16400	5400
Элĕк	120	10860	—	13000
Вăрнар	260	13360	96700	20000
Йĕпреç	200	11750	—	20000
Ишлей	360	9950	—	16200
Калинински	120	10890	15000	19100
Канаш	470	12700	44300	20000
Куславкка	120	9750	19600	19400
Комсомольски	120	13860	96000	20000
Кувакино	120	7950	—	4400
Хĕрлĕ Чутай	120	10250	—	9700
Сĕнтĕрвăрри	160	8300	—	15100
Октябрьски	160	9550	—	19000
Пăрачкав	120	10110	—	6600
Советски	80	9850	—	9700
Сĕнтĕр	470	12910	—	15000
Первомайски	80	8740	—	10600
Красноармейски	120	5600	—	15100
Вăрмар	160	13810	96000	20500
Çĕрпÿ	160	14760	56000	20500
Шупашкар	200	9760	—	13000
Чкаловски	80	10510	—	15100
Шăмăршă	80	9920	—	14000
Шăхасан	400	11800	—	20000
Çĕмĕрле	160	86010	—	8800
Етĕрне	120	8080	—	8800
Елчĕк	160	11450	—	19400
Тăвай	160	11040	—	19400
Шупашкар хули	40	1600	—	2000

32. Кайăк-кĕшĕк ĕрчетессине питех те пысăк вырăна хурса, райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсене кашни колхозникĕн килĕнче 10 чĕпĕрен кая мар çитĕнтермелле тума хушас.

33. Наркомместпрома кроликсем валли клеткăсем тумашкăн хăйĕн предприятийĕсенче 2.800 квадратлă метр тимĕр сетка туса хатĕрлеме хушас.

VII. Райçĕрĕç пайĕсен зоотехнически тата ветеринарнăй работникĕсене премисем парасси çинчен

34. Зоотехнически тата ветеринарнăй работниксене выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана пурнăçланăшăн, выльăхсене сыхласа усранăшăн тата выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ÿстернĕшĕн хавхалантарса пырас шутпа çакăн пек премисем памалла тăвас:

а) выльăх апачĕ (утă, силос, тымарçимĕç) пухса пымалли плана пурнăçланăшăн: район тăрăх—райçĕрĕç пайĕн заведующине, старши агрономне тата главнăй зоотехникне; участокпа пункт тăрăх—участок агрономне тата зоотехникне—кашнине пĕр уйăхри ĕçуксçи чухлĕ преми памалла тăвас;

б) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессин çулталăкри планне пур тĕрлĕ выльăх тĕлĕшпе те пурнăçланăшăн тата колхозсем государствăна обязательнăй йĕркепе сĕт, ашкакай, çăм, тир, çăмарта парассине пурнăçланăшăн: район тăрăх—райçĕрĕç пайĕн заведующине, главнăй зоотехникне, главнăй ветврачне, тивĕçлĕ отраçлĕсенче ĕçлекен зоотехниксемпе ветработниксене; участокпа пункт тăрăх—участокăн тата пунктăн зоотехникĕсемпе ветработникĕсене кашнине икĕ уйăхри ĕçуксçи чухлĕ преми памалла тăвас.

35. Райçĕрĕç пайĕсен главнăй зоотехникĕсене—районри колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне тата выльăх-чĕрлĕхе пăхмалли, тăрантармалли правилăсене пурнăçланине тĕрĕслесе тăракан государственнăй контроль ĕçĕсене туса пыма хушас.

Райисполкомсене, райçĕрĕç пайĕсен главнăй зоотехникĕсем тăратнă тăрăх колхозсене, колхозсен сÿрĕк ĕçлекен руководителĕсене тата выльăх-чĕрлĕх фермисен заведующийĕсене çакăн чухлĕ штраф тÿлеттерме право парас: колхозсене—1000 тенкĕ таран, уйрăм руководительсене хăйсен шутĕнчен—100 тенкĕ таран.

36. Райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсене колхозсенче 1941 çулта выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ÿстернĕшĕн кушса тÿленине тÿлеменнине тĕрĕслеме хушас; хушса тÿлемен колхозсенче колхоз правленийĕсен колхозниксене тивĕçлĕ таран хушса тÿлемелле. 1942 çулта пур колхозсен те СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ÿстернĕшĕн колхозниксене ĕçпе хушса тÿлемелли çинчен» йышăннă постановление пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртмелле.

37. Райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсене 1942 çулта ĕнесĕр колхозниксене колхозсем урлă пăрусем сутăн илме пулăшассине организацилеме хушас. Пăрусем илме чи малтан красноармеецсен çемьисене пулăшас пулать.

38. Мĕнпур колхозсем умне, вырăнти парти, совет тата çĕр-ĕç оргăнĕсем умне 1942—1943 çулсенче кашни колхозра обществăллă выльăх-чĕрлĕх валли кирлĕ çуртйĕрсем, выльăх шутне малалла ÿстерме тата унăн продуктивноçне хăпартма юрăхлă та çителĕклĕ çуртйĕрсем тăвас задача лартас.

Райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсене икĕ уйăх хушшинче кашни колхозра выльăх-чĕрлĕх валли çуртйĕрсем çителĕклипе çителĕклĕ маррине те тата вĕсем мĕнле тăнине тĕрĕслесе ĕçе организацилеме хушас; кашни колхозра выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрсем мĕнле тăнине тата выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрсем тăвас тĕлĕшпе те, пуррисене йĕркелес тĕлĕшпе те малашне колхозăн мĕнле ĕçсем тумаллине кăтартса акт сем çырмалла, колхозсене хĕллехи вăхăтпа усă курса кирлĕ строймагериалсене хатĕрлеме тата турттарса тухма хушас.

39. Чăваш АССР Çĕр-ĕç Халăх Комиссариатне пĕр уйăх хушшинчи срокра, вырăнти условисене шута илсе, ĕç выльăхĕпе продуктивнăй выльăха пăхса усрамалли тата тăрантармалли зоотехнически тата ветеринарнăй правилăсене пăхса тухса сĕнетме, çав правилăсене çирĕплетмешкĕн Чăваш АССР Совнаркомне тăратма хушас.

40. Колхозсен, совхозсен тата ялхуçалăхĕнче малта пыракансен çитĕнĕвĕсене анлăн кăтартмашкăн райсовет исполкомĕсене кашни çул кĕркунне районри ялхуçалăх выставкисене туса ирттерме, чи лайăх çитĕнÿсемшĕн премисем пама хушас.

41. Районри совет исполкомĕсене 1942 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана, çавăн пекех тата выльăх апачĕ пухса пымалли задание икĕ эрне хушшинче кашни колхоза çитерсе пама хушас, 1942 çулта пур колхозсем те СССР Совнаркомĕ 1941 çулти майăн 29-мĕшĕнче «Колхозсенче выльăх-чĕрлĕх апатне ÿстермелли мерăсем çинчен» йышăннă постановление пĕр, пăркаланмасăр пурнăçа кĕртмелле тума хушас.

42. Выльăх апатне перекетлес тата выльăх-чĕрлĕхĕн продуктивноçне ÿстерес шутпа колхозсене хăйсен выльăх апачĕсен ресурсĕсемпе йĕркеллĕн усă курма сĕнес, çавна тума шутпа апатсене вĕри шывпа çемçетсе парассине тата турăса парассине анлăн ĕçе кĕртес.

43. Райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсене апрелĕн 10-мĕшĕнчен колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх енĕпе ĕçлекен работниксен районри канашлăвĕсене ирттерме хушас. Çав канашлусенче государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли, çамрăк выльăхсене сыхласа хăвармалли тата выльăхсене лайăх пăхса хĕл каçармалли планне пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе тума тивĕçлĕ мероприятисене сÿтсе явмалла. Çак постановлени тăрăх райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсен решенийĕсем йышăнса вĕсене районри хаçатсенче пичетлесе кăлармалла.

44. Райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсене çак постановление пурнăçа кĕртсе пынине тăтăшах тĕрĕслесе пыма хушас, уйăхра пĕр хутран кая мар райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсен заседанийĕсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç колхозсенче мĕнле пынине пăхса тухма, выльăх-чĕрлĕх шутне ÿстерме палăртса хунă плана кирек мĕнле пулсан та пурнăçа кĕртме кирлĕ мерăсене йышăнма хушас.

45. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта пыракансене анлăн кăтартмашкăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе куçса çÿрекен ялав памалла тăвас, республикăри «Красная Чувашия» тата «Чăваш Коммуни» хаçатсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта пыракансем валли хисеп хăми организацилес.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ А. СОМОВ.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ П. ПИВОВАРОВ.

Çуракине большевикла хатĕрленер

Çураки ĕçĕсен планне ăнăçлăн пурнăçлатпăр

Пирĕн Тăвай МТС-ĕ тракторсем юсамалли плана ытлашшипех тултарчĕ. Ку ĕçре уйрăмăнах Григорий Козлов тракторист пысăк пултарулăх кăтартрĕ. Вăл пуçарнипе радиатор варрисене трактористсем хăйсемех хатĕрлерĕç.

Çунтармаллипе сĕрмелли материалсене те çураки тума кирлĕ таранах турттарса килсе хунă. Анчах Главнефтесбытăн Чăваш республикинчи конторин машинно-тракторнăй станцисене горючи вăхăтра тата çителĕклĕ парса тăрас ĕçре пысăк çитменлĕхсем пуррине кăтартса хăварас пулать. Çав конторăри работниксен çаврăнăçусăрлăхне пула горючи илме кайнă пирĕн лавсем хăшпĕр чухне каялла ахалех таврăнаççĕ.

Хальхи вăхăтра кадрсем хатĕрлес ыйту уйрăмăнах çивĕччĕн тухса тăрать. Фронта кайнă трактористсем вырăнĕнче ĕçлеме эпир хĕрсене вĕрентетпĕр. Кăçалхи çул пурĕ 34 тракторист вĕрентсе кăлартăмăр, вĕсенчен 25-шĕ хĕрсем. Халĕ тата трактористсен курсĕнче 7 арçын ача, 24 хĕрача вĕренеççĕ. Çапла вара çураки вăхăтĕнче пирĕн кашни трактор пуçне 2 трактористка пулать.

Çитес çуракинче пирĕн 6 пин гектар ытла сухаласа хăвармалла, çакă вăл 15 лаша вăйлĕ кашни трактор пуçне 123 гектар тивет. Çакăн пек пысăк ĕç планĕ пирĕн нихăш çул та пулман. Апла пулин те эпир ăна пурнăçлама пултаратпăр. Çакна ăна пĕлтĕр тунă ĕçсем те çирĕплетсе параççĕ. 1940 çулта эпир 6500 гектар сухаларăмăр, çакă вăл 15 лаша вăйлĕ кашни трактор пуçне 130 гектар тивнĕ. Пĕлтĕр те плана пирĕн МТС 106 процент тултарчĕ. Уйрăм трактор бригадисем çурхи ĕçсен планне нумай иртерсе тултарчĕç. Коровин юлташăн бригади, сăмахран, трактористсем тумалли ĕç планне 197 процент тултарчĕ. Бригадăри тракторист И. Семенов юлташ ЧТЗ тракторпа норма тăрăх 11 гектар сухалас вырăнне 18—19 гектар сухаларĕ. Çак канашлăвăн участникĕ трактористка А. Иванова юлташ çуракинчи заданине 275 процент тултарчĕ.

Çураки ĕçĕсене лайăх ирттерес тесе пирĕн Тăвай МТС-ĕ Вăрмар тата Елчĕк МТС-семпе социализмлă ăмăртăва тухрĕ. Пирĕн коллектив çуракинче тракторсемпе тумалли ĕçсен планне пĕтĕмпех тултарма обязательство илчĕ. Илнĕ обязательствăсене тултаратпăрах.

ШИРОВ.
Тăвай МТС директорĕ.

Ăмăртса ĕçлетпĕр

Иртнĕ çулта эпир «Большевик» колхозпа ăмăртса ĕçлесе тухăçлă тырпул туса илтĕмĕр. Вăтам шутпа кашни гектар çинчен ыраш 13 центнер, сĕлĕ 13 центнер ытла пухса кĕртрĕмĕр. Кăçал тырпул тухăçне унтан та ытларах ÿстересси—пирĕн задача. Çак задачăна пурнăçлама эпир тытăннă та ĕнтĕ. Çуракине кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа ирттерме йăлтах хатĕрленсе çитрĕмĕр. Паянхи куна кирлĕ вăрлăхсене сортласа хунă.

Кăçал пирĕн 184 гектар çĕр лаптăкне акса хăвармалла, вăл шутран сĕлĕ—125 гектар, тулă—15 гектар, пăрçа—20 гектар çине акмалла. Çак çĕр лаптăкне акса хăварма 300 центнер вăрлăх кирлĕ, ăна эпир йăлтах сортласа, тасатса хунă.

Уя 800 лав тислĕк кăлартăмăр, 8 центнер фекали, 20 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухрăмăр. Кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, кĕл пухас ĕçре уйрăмăнах шкул ачисем тăрăшса ĕçлерĕç. Комсомолецсем, пысăк хавхаланупа ĕçлесе, ялхуçалăх машинисене йăлтах юсаса çитерчĕç.

Лаша таврашсене, урапасене 81 çулти колхозник Т. Григорьев юсать. Юсавлă мар пĕр сÿсмен те, пĕр йĕнерчĕк те ан пултăр,—тет вăл. Час-часах вăл бригадирсемпе пĕрле кÿлмелли таврашсем юсавлипе юсавлă маррине пăхма тухса çÿрет.

Колхозра кăçал лашасен хисепĕ иртнĕ çулхинчен сахалтарах. Çакна шута илсе, çуракине тухма лашасене лайăхрах тăрантаратпăр.

Колхоз çуракинчи ĕçсен планне турĕ, унта кашни колхозникех паллаштарнă.

Кăçал эпир «Малти Ямаш» колхозпа ăмăртса ĕçлетпĕр. Ăмăртура мала тухассишĕн тăрăшатпăр.

А. КУЗЬМИН.
Çĕрпÿ районĕнчи «Союз» колхоз председателĕ.

ШКУЛ ÇУРАКИНЕ ТУХМА ХАТĔРЛЕНЕТ

Первомайскинчи вăтам шкулта ялхуçалăх ĕçĕсене вĕренме январь уйăхĕнче тытăннă. Занятисем, программăра кăтартса панă тăрăх, куллен тăватшар сехет йĕркеллĕн пулса пыраççĕ.

7—8-мĕш классенче вĕренекенсем агротехникăпа тата ялхуçалăхĕн çăмăлрах машинисемпе паллашаççĕ, 9—10-мĕш классенче трактора вĕренеççĕ. Занятисем наглядно ирттеççĕ. Çавăнпа шкула вырăнти «Красный луч» колхозран плугсем, сеялкăсем тата ытти çăмăлрах машинăсем те илсе пынă. Трактора вĕренекенсем валли МТС-ран трактора уйрăм пайĕсене илсе пыраççĕ. Кунсăр пуçне тата трактора пĕтĕм комплексĕпе курса паллашмалла чухне 9—10-мĕш классенче вĕренекенсене МТС картишне экскурсие илсе каяççĕ.

Ялхуçалăх ĕçĕсене вĕренмелли занятисемпе вĕренекенсем питĕ интересленеççĕ, уроксене тимлĕн итлеççĕ. Казаков, Хозяинов, Сидукова, Емельянова, Григорьева тата Казенов вĕренекенсем ялхуçалăх ĕçĕсене вĕренес енĕпе яланах отлично паллăсем илеççĕ.

Ялхуçалăх ĕçĕсене вĕренесси çавăн пекех Турханти, Бахтигильдинри тата Чеменевăри вăтам шкулсенче те ăнăçлăн пырать.

Первомайски районри çĕр-ĕç пайĕ нумаях пулмасть шкулсенчи ялхуçалăх предметне вĕрентекен преподавательсемпе ялхуçалăх специалисчĕсене пухса канашлу туса ирттерчĕ. Канашлу ялхуçалăхĕн шкулта вĕренекен ĕçĕсене производствăри ĕçсемпе мĕнле çыхăнтарса пырасси çинчен сÿтсе яврĕ. Ялхуçалăх урокĕсене практикăллă ĕçсемпе таччăн çыхăнтарас тĕлĕшпе канашлу усăллă кăтартусем пачĕ.

Т. НИКИТИН.

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

I

Ленинград фронтĕнчи войскăсем 1942 çулти мартăн 23-мĕшпе мартăн 31-мĕш хушшинче тытса илнĕ трофейăсем

Ленинград фронтĕнчи войскăсем противника хирĕç мартăн 23-мĕшĕнчен пуçласа мартăн 31-мĕшне çитиччен çапăçнă хушăра çакăн пек трофейăсем ТЫТСА ИЛНĔ: орудисем—85, танксем—10, бронемашинăсем—6, минометсем—65, пулеметсем—385, танксене хирĕç пемелли пăшалсем—28, автоматсем—173, винтовкăсем—1562, радиостанцисем—11, грузовой автомашинăсем—129, мотоциклсем—17, ракетăсем—3.000 ытларах, гранатăсем—5.583 тата гранатăсем хунă 54 ещĕк, снарядсем—7.788 тата снарядсем хунă 150 ещĕк, минăсем—11.300 тата минăсем хунă 220 ещĕк, винтовка патронĕсем 1.291.300.

Çав вăхăт хушшинче ПĔТЕРСЕ ТĂКНĂ: нимĕçсен 23 самолетне, 25 орудине, 83 минометне тата тĕрлĕрен пурлăхсем тиенĕ 45 автомашинине.

Мартăн 23-мĕшĕнчен пуçласа 31-мĕшне çитиччен противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 12.000 çынна яхăн вилсе пĕтнĕ.

II

Калинин фронтĕнчи войскăсем 1942 çулти мартăн 21-мĕшĕнчен пуçласа апрелĕн 1-мĕшне çитиччен тытса илнĕ трофейăсем

Калинин фронтĕнчи войскăсем мартăн 21-мĕшпе апрелĕн 1-мĕш хушшинче противникăнне çакăн пек трофейăсем ТЫТСА ИЛНĔ: танксем—6, орудисем—27, пулеметсем—130, минометсем—21, автоматсем—41, винтовкăсем—560, снарядсем—1.400, винтовка патронĕсем—56.000 ытла, радиостанцисем—4, автомашинăсем—36, цистернăсем—8, парашютсем грузсемпе пĕрлех—7, лашасем—130, йĕлтĕрсем—300 мăшăр, продовольствисен тата горючипе боеприпассен склачĕсем.

Çав вăхăт хушшинче ПĔТЕРСЕ ТĂКНĂ: нимĕçсен 35 самолетне, 39 танкне, 443 автомашинине, 52 орудине, 23 пулеметне, 25 минометне, боеприпассемпе тĕрлĕрен çар пурлăхĕсем тиенĕ 154 лавне, боеприпассен 6 складне, продовольствин пĕр складне, оборона тытмалли 74 пунктне, 30 блиндажне тата 32 огневой точкине.

Мартăн 21-мĕшĕнчен пуçласа апрелĕн 1-мĕшне çитиччен Калинин фрончĕн районĕнче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 10.000 çын ытла вилсе пĕтнĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 2-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 2-мĕшĕнче фронтăн хăшпĕр участокĕсенче пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

Апрелĕн 1-мĕшĕнче нимĕçсен 57 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 11 самолет пĕтнĕ.

Баренц тинĕсĕнче пирĕн карап противникăн подводнăй лодкине путарнă.

* * *

Апрелĕн 1-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен темиçе танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 75 автомашинине, горючи тултарнă автоцистернине, 15 полевой тата зенитнăй орудине, 15 минометне, 9 пулеметне, зенитнăй пулеметсен 3 точкине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ. Наблюдени аэростатне персе антарнă, боеприпассен 5 складне сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Пирĕн кавалерии Тимофеев юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçне хирĕç (Калинин фрончĕ) гитлеровецсем танксен групппи пулăшса пыракан пехотине контратакăна кĕртсе янă. Противникăн йышĕ пирĕннинчен нумай пулнă пулин те, хаяр çапăçу хыççăн унăн каялла чакма тивнĕ. Вилнисене кăна шутласан та, нимĕçсем хăйсен салтакĕсемпе офицерĕсене 650 çынна ытла çухатнă. Тăшманăн 3 танкне персе çĕмĕрнĕ, 4 пулеметне тата 2 орудине пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче противник, танксен пысăк ушкăнĕ тата авиаци хӳтĕленипе, К. ялне йышăнса илме хăтланнă. Çапăçу темиçе сехет хушши пынă. Гитлеровецсене каялла сирсе янă, ял патне пымалли вырăнсенче вĕсем çĕршер çын виллисем выртса юлнă. Противникăн 16 танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн гвардейски стрелковăй часть противника халăх пурăнакан пунктран хăваласа кăларнă, çавăн чухне нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 100 çынна ытла пĕтерсе тăкнă. Çавăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 11 пулемет, миномет, 100 винтовка, 4 ещĕк патрон, радиостанци тата ытти çар пурлăхĕсем.

* * *

Кĕçĕн сержантăн Кочневăн орудине тăшманăн 3 танкĕ атакăланă. Оруди расчечĕ стройран тухнă. Оруди умĕнче пĕр пĕччен тăрса юлнă пулсан та, паттăр сержант çаплах тăшман çине персе тăнă, тĕл пенипе вăл нимĕçсен виççĕ танкне те çĕмĕрсе тăкнă.

* * *

Тăшманăн тылĕнче Орел партизанĕсен А. тата Р. юлташсем командир пулса ертсе пыракан отрячĕсем ăнăçлăн кĕрешеççĕ. Нумаях пулмасть, партизансем нимĕçсен 119-мĕш железнодорожнăй роти çине засадăран сиксе тухса тапăннă. Кĕске вăхăт хушши пынă тытăçура нимĕçсен 179 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă тата 64 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Отряд 180 винтовка, 10 пулемет тата 80.000 патрон тытса илнĕ.

Партизансен тепĕр отрячĕ, П. юлташ командир пулса ертсе пыраканскер, чугунçул станцийĕ çине тапăннă. Партизансем çавăнта тăракан нимĕç салтакĕсен çар эшелонĕ çине гранатăсем вăркăнтарнă, эшелона вут тивертсе янă. Темиçе кун иртсен, çав отрядах чугунçул çине минăсем хурса тухса противникăн танкĕсем, артиллери тата пехота турттарса пыракан эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Çав катастрофăна пула çав участокри чугунçул çинче поездсем виççĕ кун хушши çӳреймен.

* * *

Нимĕçсен 294-мĕш пехотнăй дивизийĕн 513-мĕш полкĕнчи 9-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ обер-ефрейтор, нацийĕ тĕлĕшпе вăл—поляк, Алоиз Бернайс гитлеровецсем поляк халăхне мĕнтери пысăк асапсем кăтартса мăшкăллани çинчен çапла каласа панă: «Полякăсем хăйсене хăйсем тĕрмери çынсем пекех шутлаççĕ, — тет Бернайс — Поляк чĕлхипе калаçма учрежденисемпе предприятисенче кăна мар, урамра та чараççĕ. Гитлеровецсем поляк халăхне террорлаççĕ. Кашни нимĕç поляка эсĕ Мускавран паракан радиона итленĕ е хăвăн ачусене поляк çырулăхне вĕрентнĕ тесе айăпласа тĕрмене хупса лартма пултарать. Январьпе февраль уйăхĕсем хушшинче илнĕ çырусенчен эпĕ çакна лайăх пĕлетĕп: нимĕçсем халĕ çамрăк поляксене, çитĕнсе çитмен ачасене те ирĕксĕрех Германие ĕçлеме яраççĕ. Матильда О. мана пата çыру ячĕ, ку çырура—тĕпсĕр хуйхă, тарăху. Вăл çапла çырать: манăн 16 çулти хĕрĕме Вена районне ячĕç тата манăн шăллăма, аттепе пĕр тăван мучейĕн ывăлне, 14 çулти Станислав Новицкие те çавăн пекех ирĕксĕрлесе Германие илсе кайрĕç».

* * *

Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра тăракан нимĕç ефрейторĕ Мартин Лунц тепĕр ефрейтор Ганс Блок патне çапла çырнă: «...Нумаях пулмасть пирĕн çине сасартăк партизансем тапăнчĕç. Эпир 72 çын çухатрăмăр. Кун пек иккенне эсĕ хăвах лайăх пĕлсе тăратăн. Пирĕн танксем çав партизансене çавăнтах йĕрлесе хăваласа тытăнчĕç пулсан та, никама та тытма пултараймарĕç».

* * *

Мешеле хулинче (Германия) автодетальсем тăвакан заводра ютсĕршывсенчен илсе килнĕ рабочисем 14 сехетлĕ ĕçкунĕ тунине хирĕç забастовка туса ирттернĕ. Штурмовиксен отрячĕ нумай çынна арестленĕ. 19 рабочие—французсемпе итальянецсене—вĕсем забастовка организаторĕсем пулнă тесе персе пăрахнă.

Апрелĕн 3-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 3-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле паллă улшăнусемех те пулман.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче кĕрешекен пирĕн пĕр стрелковăй часть, çĕрле противника кĕтмен çĕртен атакăласа, ăна халăх пурăнакан пунктран хĕссе кăларнă. Нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 370 çынна çити вилсе пĕтнĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн боецсем тăшманăн контратакине ăнăçлăн сирсе пăрахнă. Чакакан нимĕçсене хыçран хăваласа пырса, пирĕн боецсем Н. ялне çĕмĕрсе кĕнĕ те урамри кĕске вăхăт хушши пынă çапăçу хыççăн, противника каялла чактарнă. Çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 6 оруди, 3 миномет, 7 пулемет тата боеприпассен складĕ.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче противник, пирĕн войскăсем куçса пынине чарса лартма хăтланса, контратакăна хăйĕн пехотин батальонне, нумаях пулмасть Германирен килсе çитнĕскерне, кĕртсе янă. Пирĕн боецсем, пăшалсемпе пулеметсенчен тĕл персе, наступлени тăвакан нимĕçсене сапаласа янă. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 200 çын ытла вилсе пĕтнĕ. Çапăçу хирĕнче нимĕçсене 350 винтовка пухса илнĕ.

* * *

Кăнтăр фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн артиллеристсем икĕ кун хушшинче противникăнне артиллерин виççĕ батарейине тата минометсен 5 батарейине пусарса лартнă, пĕр танка çĕмĕрнĕ, 9 пулемет тата танксене хирĕç пемелли пĕр тупă пĕтерсе тăкнă.

* * *

Пирĕн разведка нимĕçсен артиллери складне асăрханă, унта лавсемпе автомашинăсем тăнă пулнă. Çав склада пĕтерсе тăкма Немцев сержантăн оруди расчетне хушнă. Виççĕ хут пенĕ хыççăн питĕ вăйлă взрыв пулнă сасă илтĕнсе кайнă. Боеприпассен складĕ тата автомашинăсемпе лавсем, гитлерла салтаксемпе пĕрлех, сывлăшалла сирпĕннĕ.

* * *

Смоленск партизанĕсен И. юлташ командир пулса тăракан отрячĕ март уйăхĕнче чылай ăнăçлă операцисем туса ирттернĕ. Çав операцисем вăхăтĕнче нимĕçсен 540 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Отрядри боецсем нимĕçсен çыхăну линине нумай хутчен татнă тата вĕсен фронтпа çыхăнса тăмалли çулĕсене пăснă. Партизансем нимĕçсен боеприпассемпе хĕçпăшал складне тытса илнĕ. Нумай хĕçпăшалсемпе патронсене партизансем хăйсемпе пĕрле илсе кайнă, ыттисене взрыв туса сирпĕнтерсе хăварнă.

* * *

Нимĕçсен 75-мĕш пехотнăй дивизийĕн 222-мĕш полкĕнчи 7-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ ефрейтор Гельмут Мюллерфельд çапла каласа панă: «222-мĕш полк юлашки вăхăтра питĕ йывăр çухатусем тӳсрĕ. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш батальонсене пĕтĕмĕшпех аркатса тăкнă. 7-мĕш ротăра 13 салтак кăна тăрса юлнă. Салтаксем çуркунне çитессине шикленсе кĕтсе тăраççĕ. Вĕсем çуркуннехи наступленирен хăраççĕ. Çав наступлени çинчен офицерсем нумай калаçаççĕ. Анчах та пулас наступлени çинчен пыракан калаçусем салтаксене нимĕн чухлĕ те хавхалантараймаççĕ. Пачах урăхла, салтаксен шухăш кăмăлĕсем татах та ытларах пусăрăнчĕç. Вĕсем вилес шăпа çитнĕ çынсем пек çӳреççĕ. Вĕсем кăшт май килсенех фронтран шăвăнма пăхаççĕ. Нумайĕшĕсем тăван çĕршыва вилес умĕнхи çырусем, халаласа хăварнисем çырса яраççĕ. Çав çырусенче вĕсем хăйсен тăванĕсене, хăйсен тăван килне урăх нихçан та кураймастпăр пуль тесе хурланса çыраççĕ».

* * *

Калинин облаçĕнчи Кузовлево ялĕнчен чакса тухса кайнă чухне гитлеровецсем ялти нумай çынсене переле пăрахнă, вăл шутра хĕрарăмсемпе ачапăчасем те пур. Вилнисем хушшинче: А. Я. Тихоновăпа унăн кăкăр ĕмекен ачи, Е. В. Кораблевăпа унăн тăватă çулти ывăлĕ тата 6 çулти хĕрĕ. Фашистла ирсĕрсем 65 çулти Мария Ходаковăна унăн икĕ внукĕпе пĕрле — 7 çулти хĕрачапа тата 3 çулти арçын ачапа пĕрле çунтарса янă. Колхозниксене çаратса тухса, нимĕçсен фашистла вăрă-хурахĕсем Кузовлево ялĕнче мĕнпур çуртсене пĕтерсе тăкнă.

* * *

Вэлени хулинче (Румыния) вырнаçнă румынсен пехотнăй батальонĕ, фронта кăсатасси çинчен приказ илнĕ хыççăн, казармăсенчен тухма отказ панă. Батальонăн казармисене жандармерипе нимĕçсен пулеметчикĕсем çавăрса илсен, румын салтакĕсем хăйсен хĕçпăшалĕсене пăрахнă. Вĕсенчен нумайĕшĕсене арестленĕ.

Тăшманăн самолечĕсене винтовкăсемпе пулеметсенчен персе ӳкереççĕ

КАЛИНИН ФРОНЧĔ, апрелĕн 1-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Хоруженко командирăн подразделенийĕнчи боецсем фашистсен самолечĕсене пехотăн хĕçпăшалĕнчен ăста персе ӳкереççĕ. Нимĕçсен бомбардировщикĕ хăйĕн бомбисене пăрахас тесе çăхан пек явăнса çӳренĕ. Рязанцев лейтенант ручной пулемет патне çиçĕм пек хăвăрт чупса пынă та, тӳррĕн тĕллесе персе, фашистсен çăханĕн моторĕпе хырăмне шăтарнă. Вут хыпса илнĕ самолет юр çине тăрăннă. Тепĕр бомбардировщик бомба пăрахас тесе пике тума тытăннă. Çав вăхăтра сержант-комсомолец Белоус самолет çине винтовкăран пенĕ. Пуля мотора лекнĕ. Самолета вут хыпса илнĕ те вăл чикеленсе анса çĕр çине ӳкнĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Луга хĕрĕ

Нимĕçсем Луга хули патĕнчех çăвĕрен атака тума хатĕрленсе тăнă. Вĕсен вăйне урăх çĕрелле туртса илес шутпа, нимĕçсен тылне истребительнăй батальон ямалла тунă.

Çуллахи хаç парти райкомĕн çурчĕ патне грузовик-машинăсем пыра-пыра чарăннă. Çӳлĕ бортлă грузовиксем çинчен винтовкăсемпе ручной пулемет кĕпçисем курăнса тăнă. Акă юлашки отряд пырса çитнĕ. Пухăннă çынсене райком секретарĕ Дмитриев юлташ кĕске сăмахпа умра тăракан задачăсем çинчен ăнлантарса панă. Машинăсем хускалса хула хыçнелле тухса кайнă, кунтан вĕсен вăрттăн сукмаксемпе тăшманăн тылне пырса кĕмелле пулнă.

Юлашки машинăсем тапранса кайнă чухне, райком секретарĕ патне пĕр шурă кофта тăхăннă ырханкка хĕр чупса пынă та хăйне каякан батальонпа пĕрле яма ыйтнă.

— Инçетри похода чăтса ирттерме вăю çитес çук санăн, Тося, тата эсĕ тумланасса та çӳхе тумланнă, — тенĕ ăна райком секретарĕ.

Анчах та хĕр райком секретарĕн ӳкĕтне кĕмен, вăл хĕрӳленсех ыйтнă: эпĕ нумай çӳреме хăнăхнă, шăнса пăсăласс инчен хăрамастăп, тенĕ вăл.

— Кайсам-и эппин, ху тăвас тенĕ пек пултăр,—тенĕ те райком секретарĕ, хĕр çине хăйĕн пиджакне ывăтса янă.

Батальон темиçе кунран каялла таврăннă. Унăн командирĕ хайхи хĕр, Тося Петрова, çинчен нумай тата ăшшăн каласа панă: Тося разведкăна кайма юратни çинчен тата вăл походри пур йывăрлăхсене те тӳсĕмлĕн чăтса ирттерни çинчен каласа панă батальон командирĕ.

— Пĕр сăмахпа каласан, ылттăн хĕр,— тенĕ вăл, Тосяна мухтаса.

Анчах та Тося пур ыйтусем çине те: «тĕлĕнмелли нимĕнех те çук» тесе таварнă,—тата хăй çинчен пыракан калаçăва урăх еннелле пăрса янă, походра ытти комсомолецсем хăйсене лайăх тытни çинчен каласа панă.

Çакăн хыççăн Тося çинчен нумайччен нимĕн сас-хура та илтĕнмен. Пĕррехинче фронтра, Луга çыннисене тĕл пулсан, сăмах майĕн Тося çинчен—вăл халĕ ăçта, мĕн туса пурăнни çинчен ыйтнă. Ыйтăва хирĕç Тося партизанра çӳрени çинчен тата вăл паттăрла ĕçсем туни çинчен каласа пĕлтернĕ. Вăл хăй тăракан отрядăн пур операцийĕсенче те пулнă, ывăнми разведчица ятне илсе мухтава тухнă, нимĕçсем йышăннă ялсенче те темиçе хутчен пулса таврăннă, çак хушăрах хăйĕн пушă вăхăчĕсене пĕтĕмпех партизансене пулăшас ĕçе панă: кирлĕ япаласене çĕленĕ, кĕпе-йĕм çунă, саплана, кăвать çинче партизансен апатне пĕçернĕ.

Малалла татах темиçе уйăх хушши Тося çинчен нимĕн те илтĕнмен. Кĕркунне çеç фронт линийĕ урлă каçса тухнă Луга партизанĕсем Тося çинчен пĕлтернĕ.

—Тося маттур вăл,—хавасланасах мухтанă ăна партизансем. Тося нимĕçсем патĕнче тыткăнра та пулнă иккен, унăн хăйĕн çавтери хăюллă харсăрлăхне пула çеç тарса хăтăлма пултарнă. Отряд командирĕ ăна, хăйĕн Варя ятлă юлташĕпе пĕрле, нимĕçсем тăракан Сабцы ялне разведкăна янă пулнă. Вĕсем хресчен хĕрĕсем пек тумланса пуçĕсене тутăр çыхнă та ялалла утса кайнă. Кулкаласа, хĕвелçавăрнăш катса утса пынă вĕсем. Сăмăрпа исленнĕ çул çинчи пылчăка атăллă урисемпе çăрнă. Акă Сабцы ялĕ. Вĕсене нимĕç патрулĕ тытса чарать: камсем пулатăр, ăçтан, ăçталла каятăр?—тесе тĕпчеççĕ вĕсенчен. Уçăлса çӳретпĕр, тесе тавăраççĕ хĕрсем. Анчах та вĕсен пылчăкпа лапăртаннă аттисене кура, нимĕç патрулĕсем хĕрсен сăмахĕсене ĕненмеççĕ. Вĕсене тытаççĕ те комендант патне илсе каяççĕ. Комендатурăра хĕрсенчен нумайччен тĕпчеççĕ, вĕсен тумтирĕсене шăршласа пăхаççĕ—тумтирĕсенчен сĕрĕм шăрши кĕрет. Алла лекнĕ хĕрсем камне çавах та пĕлеймеççĕ, çакна пула ирхине вĕсене кӳршĕ яла илсе каймалла тăваççĕ, унта ку хĕрсем чăнахах та çав ялтан иккенне тĕпчесе пĕлмелле тăваççĕ. Тосяпа Варяна пĕр пĕчĕк пӳлĕме лартаççĕ те алăк патне хĕçпăшаллă часовой тăратаççĕ. Ирхине хĕрсене корзинкăсем йăттараççĕ, тăватă конвоир-салтакпа пĕрле вăрман тепĕр енче выракан кӳршĕ яла кăларса яраççĕ. Малтан та хыçран та икшер салтак пыраççĕ, Тосяпа Варя комсомолкăсем вĕсен хушшипе утаççĕ. Ниепле те вĕçерĕнсе тарма çук. Вăрмана çитсе кĕрсен, сасартăк таçта пăшалран пенĕ сасăсем илтĕнсе каяççĕ: малтан пĕчченшерĕн пени, унтан нумайăн та нумайăн пени илтĕнме пуçлать. Кăна таçта хире-хирĕç пырса перĕннĕ нимĕçсемпе партизансем перкелешеççĕ пулмалла. Конвоир-салтаксем шикленсе пĕр çĕре пуçтаранса тăраççĕ, мĕн тумалли çинчен канашлаççĕ. Çак вăхăтпа усă курса, Тося аллинчи корзинкăсене пăрахать те йывăç тĕмисем хушшинелле чăмса кĕрет. Ун хыççăн Варя та чупать. Нимĕçсем винтовкисене ярса тытаççĕ, пĕрер обойма персе пĕтереççĕ. Тося вăрманалла ыткăнать, сулахая пăрăнса сĕм хырлăха пырса кĕрет. Хыр вуллисене пыра-пыра перĕнсе, тункатасенчен такăнкаласа, шăтăк-путăксенчен ӳке-ӳке тăрса чупать, чупать çаплах малалла. Акă унăн вăйĕ те пĕтсе çитет, çав вăхăтрах нимĕçсем те çывхарсах пыраççĕ. Вĕсем кăшкăрни, ура айĕнчи туратсене шатăртаттарни хыçрах илтĕнет. Умра çил-тăвăлпа тăпăлса ӳкнĕ, пысăк тымарĕсем çеремпе витĕнсе ларнă пысăк йывăç выртать. Тося васкасах çав тăпăлнă тымар патне чăмса кĕрет те хăйне тымар çинчен çакăнса тăракан çеремпе хупласа хурать. Тепĕр минутăран нимĕç салтакĕсем çав тымар çумĕнченех чупса иртеççĕ, анчах та Тосяна курмаççĕ. Тося унта каç пуличченех выртать. Унтан, ерипен тухса, йывăç тĕмисем хушшипе шуса кĕрет те çĕрле пуласса кĕтет. Çĕрле вара чиперĕнех хăйсен отрядне таврăнать. Ирхине унта унăн юлташĕ Варя та çитет.

Çакăнтан кайран каллех Тося çинчен нумай вăхăт нимĕн сасă та илтĕнмест. Унăн отрячĕ нимĕçсен инçетри тылĕнче кĕрешнĕ. Партизансен ытти отрячĕсем Тосяна тĕл пулман, анчах та вĕсем, çав çамрăк партизанкăна тытса паракансем пулсан, унăн пуçĕшĕн нумай пин тенкĕ укçа пама пулни çинчен çеç пĕлеççĕ.

Çак кунсенче çеç пирĕн войскăсем тăракан çĕре Луга патĕнчи партизансен ушкăнĕ килсе тухрĕ.

— Тосяна тĕл пултăр-и? — тесе ыйтрĕç вĕсенчен.

— Тося çук, — тесе пĕлтерчĕç вĕсем.

Партизансем Луга хулин комсомолки, çамрăк Тося, геройла вилĕмпе пĕтни çинчен каласа пачĕç. Вăл тăракан партизансен отрячĕ малтанхи кун çеç тепĕр отряд пăрахса хăварнă пушă землянкăна кĕрсе вырнаçнă пулнă. Пĕр канмасăр 40 километр утса тухнă партизансем çавтери ывăнса çитнĕ пулнă. Вĕсем хурала часовой тăратнă та канма выртнă. Тося çывăрман. Вăл, яланхи пекех, çунакан кăвать патне ларнă та хуçалăх ĕçĕсене тунă, каçхи апат хатĕрленĕ. Кăвать хума пĕр çамрăк партизан çапă çĕкленĕ. Çак партизан Тосяна килĕшмен, мĕншĕн тесен вăл час-часах нăйкăшнă, яланах хăранă. Çакăн пирки отрядра ăна фронт линийĕн тепĕр енне каçарса ярасси çинчен те калаçкаланă.

Хăвăрт тĕттĕмленсе пынă. Çил пуçланнă. Таврари вăрман кашланă, качăртатнă, те тăшман çывхарса пырать, ăна уйăрса илме пулман. Сасартăк хаярран шартлатнă сасăсем вăрмана чĕтретсе янă, йĕри-тавралăх тĕтĕмпе хупланнă, йывăç тĕмисене çулăм хыпса илнĕ. Тося кăвать патĕнчен сиксе тăрса браунингне ярса тытнă. Вăл хăйĕнчен вунă утăмра тенĕ пек кăна нимĕçсене курнă. Хĕре курсан нимĕç салтакĕсем: «Вырăс, парăн!» тесе кăшкăрса, ун патнелле чупнă.

Тося йывăç вули çумне лăпчăнса тăнă та пистолетне çĕкленĕ. Вăл персе янă малтанхи пуля пуçран лекнипе нимĕç салтакĕ ун патĕнчен икĕ утăмра кăна çаврăнса аннă. Тепĕр салтакĕ Тосяна хыçран пырса тытма хăтланнă, анчах та ăна хырăмĕнчен пуля çитсе лекнĕ. Çак самантрах чĕтренчĕк сасăпа: «Ан вĕлерĕр, парăнатăп!» тесе кăшкăрни илтĕнсе кайнă. Тося çаврăнса пăхнă. Вăл хайхи çамрăк партизан аллисене тăратса нимĕçсем патнелле утса пынине курнă.

— Акă туян, предатель! — тенĕ те Тося хăравçă сутăнчăк çинелле персе янă. Лешĕ канавалла тĕшĕрĕлсе аннă. Çак вăхăтра нимĕçсем, пур енчен те тĕмескесем урлă сиккелесе, Тося патнелле ыткăнса пынă. Тося вара револьверĕпе хăйне кăкăрĕнчен тĕллесе пенĕ.

Çак вырăна ирхине тепĕр отрядри партизансем пырса çитме ĕлкĕрнĕ. Кăвать вутти çаплах йăсăрланса тăнă, унпа юнашарах Тося Петрова пичĕпеле юнлă юр çине тăрăнса выртнă. Партизансем унăн ӳтне хăйĕн юлташĕсен виллисем выртакан землянкăна кĕртсе хунă та, землянкăн алăкне йывăр чул катăкĕсемпе питĕрсе лартнă.

Вăхăт çитĕ, çак героиньăн ӳтне ирĕке кăларнă Луга хулине илсе кайса пысăк хисеплĕхпе пытарĕç.

Д. РУДНЕВ.
(«Правда» хаçатран).

Украина артисчĕсен фронтри выступленийĕсем

Украинăри Театр искусствин работникĕсем действующи армири боецсемпе, командирсемпе тата политработниксемпе тачă çыхăну тытса тăраççĕ.

Кăнтăр-Хĕвеланăç фронтĕнчи чаçсенче нумай вăхăт хушши Киеври оперăпа балетăн Шевченко ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ театрĕн бригади выступленисем туса çӳрерĕ. Çитес çывăх вăхăтрах бригада хăйĕн выступленийĕсене Кăнтăр фронтĕнчи боецсемпе командирсем патне çитсе кăтартма пуçлать.

(ТАСС).

Партизансемпе колхозниксен делегацийĕ Ленинградăн руководителĕсем патĕнче

ЛЕНИНГРАД, апрелĕн 2-мĕш. (ТАСС). Ленинград облаçĕн вăхăтлăха нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем тытса илнĕ районĕсенчен пынă партизансемпе колхозниксен делегацийĕ Ленинградри партипе совет организацийĕсен руководителĕсемпе тата Ленинград фрончĕн çар совечĕпе тĕл пулнă. Делегаци Жданов юлташа колхозниксемпе партизансем çырнă çырăва, темиçе çĕр çын алă пуснăскере, панă. Çав районсенчи колхозниксем продуктсемсĕр пуçне тата çĕршыв оборонин фондне хывма 26.756 тенкĕ укçа пухнă. Фронтăн линийĕ урлă каçсанах делегаци çав укçана Госбанкăн полевой конторине панă. Укçана Госбанк контори илнине кăтартакан квитанцие делегаци Жданов юлташ аллине панă.

Делегаци тата парне вырăнне, нимĕçсен фашистла бандисене хирĕç çапăçса тытса илнĕ трофейăсенчен нимĕçсен темиçе автоматне илсе пынă.

Тăванла ăшшăн калаçнă чухне партизансемпе колхозниксем хăйсен боевой ĕçĕсем çинчен, колхозниксем нимĕçсен оккупацийĕн условийĕсенче мĕнле пурăнса, мĕнле кĕрешсе пыни çинчен каласа панă. Партизансен отрячĕсем кĕрешекен района, делегатсем килнĕ района, нимĕçсем хăйсемех «партизансен крайĕ» тесе ят панă. Çав районсенче пирĕн совет çыннисем—партизансем, партипе совет тата колхоз активĕсем хуçа пулса тăраççĕ. Нимĕçсем унта колхозлă пурнăçа аркатса яма пултарайман. Партизансен движенийĕ вăл шăпах та колхозлă массăпа таччăн та çирĕппĕн çыхăнса тăрать. Çакă вĕсене нимĕçсен захватчикĕсемпе сутăнчăксене хирĕç кĕрешес ĕçре вăй тата шанчăк парать. Партизансен движенийĕ кунран кун вăйланрах та вăйланрах пулса пырать.

Нимĕçсем оккупациленĕ районсенче пурăнакан колхозниксем Мускавпа Ленинградран килекен кашни сăмаха тем пек тимлĕн итлеççĕ. Пирĕн Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсем çинчен калакан хаваслă хыпарсем, противник тытса илнĕ районсене лекекен пирĕн листовкăсемпе хаçатсем каласа паракансем, совет çыннисен патвăрлăхне ӳстереççĕ тата гитлеровецсен шайкисене часах çапса аркатассине ытларах та ытларах ĕнентереççĕ.

Жданов юлташ хаклă хăнасене хĕрӳллĕн саламланă тата вĕсене парнесем илсе килнĕшĕн Ленинградри ĕççыннисен ячĕпе тав тунă. Вăл партизансемпе колхозниксене Ленинградри предприятисене тата Ленинград фрончĕн уйрăм участокĕсене пырса курма, унтан тата Ленинградри ĕççыннисемпе фронтри боецсене хăйсен çапăçу опычĕ çинчен каласа пама чĕннĕ.

НИМĔÇ ОККУПАНЧĔСЕНЕ — ВИЛĔМ! Нимĕçсем оккупациленĕ Н-ски районра вăрçă пуçлансанах партизансен отрячĕ организациленнĕ. Кĕске вăхăт хушшинчех пĕчĕк группăран пысăк, лайăх хĕçпăшалланнă партизанла отряд пулса тăнă. Çав отряд ĕнтĕ нумай уйăхсем хушши тăшманăн тылĕсене аркатмаллах çĕмĕрет. Отрядра çав районри рабочисем, совет интеллигенцийĕ тата колхозниксем тăраççĕ.

Иртнĕ март уйăхĕн 7-мĕшĕнче Çар Совечĕн членĕ уйрăмăнах палăрнă 39 партизана правительство наградисене панă. Ӳкерчĕк çинче: Р. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ тăшманăн тылне каять.

Г. ПЕТРУСОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Май уявĕ умĕнхи ăмăрту

Ĕç тухăçлăхне икĕ хут ÿстерчĕç

КАНАШ. Вагонсем юсакан заводри стахановец-трубочниксем Лукинпа Пиульский юлташсем, Май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, хăйсен ĕç тухăçлăхне икĕ хут ÿстерме обязательство илнĕ. Халĕ вĕсем çак обязательствăна ăнăçлăн пурнăçланин тĕслĕхĕсене кăтартаççĕ те ĕнтĕ. Вĕсем ĕçе çур сехет малтан тухса, ĕç вырăнне хатĕрлеççĕ, станоксене çу сĕрсе тасатаççĕ.

— Станоксене таса тытни ĕç тухăçлăхне ÿстерме пулăшать, — тет Лукин юлташ.

Юлашки кунсенче Лукин юлташ хăйĕн ĕç тухăçлăхне икĕ хут ытла ÿстерчĕ. Иртнĕ уйăхсенче вăл сменăри заданисене 300 процент тултарчĕ, апрель уйăхĕнче задание 400 процент таран тултаракан пулчĕ.

Пиульский юлташăн паха ĕçĕсемпе пĕтĕм цех коллективĕ мухтанать. Вăл куллешхи заданисене пĕрмаях 400 процентран иртерсе тултарать. Тухăçлă ĕçленипе пĕрлех вăл çамрăксене станоксемпе ĕçлеме вĕрентет.

П. С.

Тимĕр каскалакан цех малта пырать

Çак кунсенче Шупашкарти промкомбинатра ĕçлекен рабочисемпе служащисен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура вĕсем ĕçсыннисен чаплă уявне—Майăн 1-мĕшне тивĕçлипе кĕтсе илесси çинчен сÿтсе-яврĕç. Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, промкомбинат коллективĕ ĕçсыннисем валли куллен кирлĕ таварсене туса кăларас ĕçе вăйлатма, вĕсен хăйне ларакан хакне йÿнетме, пахалăхне лайăхлатма пулчĕ.

Ăмăртура халĕ тимĕр каскалакан цех малта пырать. Ку цех март уйăхĕнчи плана 150 процент тултарчĕ, Май уявне апрель уйăхĕнчи плана 115 процент тултарнипе паллă тума обязательство илчĕ. Цех коллективĕ хăй çине илнĕ обязательствăна пурнăçлассишĕн халĕ çине тăрса кĕрешет. Кунта нормăна тултарман рабочи пĕре те çук. Павлов, Нейдельман тата ытти юлташсем те нормăна 120—130 процент тултарса ĕçлеççĕ.

Çăматăсем йăвалакан цехра ĕçлекенсем апрель уйăхĕнчи плана 110 процент тултарма обязательство илнĕ. Халĕ вĕсем хăйсен обязательствине ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ. Çак иртнĕ кунсенче сменăри заданисене 120 процентран кая пĕре те тултарман. Цех мастерĕ Федосеев юлташ ĕçе тĕрĕс йĕркелесе, пултаруллăн ертсе пырать.

Т. И.

Ăмăрту организаторĕсем

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Древкомбинатри иккĕмĕш цех коллективĕ, Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, хăй çине апрель уйăхĕн планне срокчен тата пысăк пахалăхпа тултарма обязательство илчĕ. Çавăнпа пĕрлех цех коллективĕ виççĕмĕш, тăваттăмĕш, пиллĕкмĕш тата тăххăрĕмĕш цехсене ăмăртăва чĕнчĕ. «Май уявне ытларах продукци туса кăларнипе, фронта пулăшассине вăйлатнипе кĕтсе илер», тесе çыраççĕ цехри рабочисем хăйсен чĕнĕвĕнче.

Халĕ цехри рабочисемпе сменăсем тата бригадăсем хушшинче илнĕ обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçлас тĕлĕшпе кĕрешÿ сарăлсах пырать. Чылай стахановецсем ĕçре рекордлă тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Çакă вăл уйрăмăнах столяр-сборщиксем хушшинче усăн палăрать. Стахановец Варажин юлташ мартăн малтанхи çуруйăхĕнче хăйне панă задание 358 процент тултарнă, юлашки вăхăтра вăл хăвăртлăхсене татах та ÿстерчĕ, уйрăм кунсенче тăватшар норма тăвать.

Столярсем Дерябин, Волков, Марфин юлташсем юлашки уйăхра кашниех ĕç нормисене 351—356 процент тултарнă. Май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, вĕсем апрель уйăхĕнче татах та ытларах ÿсĕм тума сăмах пачĕç. Патриотсем хăйсен сăмахне халь те тивĕçлĕн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Вĕсем пекех ĕçлеççĕ Логинов, Карелин, Поликарпов юлташсем те. Вĕсем март уйăхĕнче куллен виçшер норма туса пынă.

Ăмăртăва сарса пынă май, ытти цехсенче те двухсотниксемпе трехсотниксен йышĕ ÿсет. Паянхи куна вĕсен хисепĕ комбинатра çĕр çырăн та иртрĕ.

Х. ЛИСИН.

Сезона хатĕрленет

Апрелĕн юлашки кунĕсенче торф кăларакан предприятисен ĕç сезонĕ пуçланать. Чăваш автономийĕ 20 çул тултарнă ятпа тăракан предприятин коллективĕ çак сезона кĕтсе илме хатĕрленет.

Кунти рабочисем, Май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, хăйсен ĕç тухăçлăхне ÿстереççĕ. Механически цехри слесарьсем П. Морозов, И. Шишкин тата А. Тюрин юлташсем кулленхи нормăна 170 процент тултараççĕ. Строительствăра ĕçлекен Е. Воротний, Н. Ворошин, С. Панарин юлташсем те хăйсене панă заданисене ытлашшипех пурнăçлаççĕ. С. Воробьев тата В. Федоров юлташсем вăрман касна çĕрте тухăçлă ĕçлеççĕ.

В. УЛХАШ.

Паттăр железнодорожниксем

Депо начальникĕ Вячеслав Иванович Прокофьев селектор кнопкине пусрĕ те:

— Диспетчер. Пирĕн паровоз мĕнле шăвать? — тесе ыйтрĕ.

Пире диспетчер отвечĕ илтĕнмерĕ, çакă кăна паллă пулчĕ: трубкăна çакса хунă май, Прокофьев юлташ савăнăçлăн кулса илчĕ.

— Комсомолец Ленька Николаев, — пĕлтерчĕ вăл пире, — Канаш—Сергач маршрутпа 3.100 тонна груз тиенĕ состава пĕр чарăнусăр малалла илсе пырать...

Хĕрлĕ Çар командирĕ фронтри çапăçу операцийĕсене ертсе пынă пекех, Прокофьев юлташ хăйне шанса панă депори боевой машинăсен экипажĕсем — паровоэсен машинистĕсемпе вĕсен помощникĕсем васкавлă грузсене кирлĕ çĕре еппе илсе çитерниие тăтăшах тĕрĕслесе тăрать. Халĕ ĕнтĕ вăл тĕрĕслесе пăхрĕ — машинист Леонид Николаев хăйне панă задание вăхăтра пурнăçлама пултарать.

Отечественнăй аслă вăрçă пуçлансанах, депо коллективĕ пур ĕçе те фронтри пек — вăхăтра, хăвăрт тата пысăк пахалăхпа туса пыма обязательство илнĕ. Паровозниксемпе комплекснăй бригадăра ĕçлекенсем мĕнпур ĕçе вăхăта-мĕне пăхса тăмасăр, вăй-хала шеллемесĕр пурнăçлама пулнă. Николаев, Колятанов, Клинов, Байдулов машинистсем Германи оккупанчĕсене пĕр çын юлмиччен пĕтерсе тăкичченех паровоз çинчен анмастпăр, тесе шантарнă. Комплекснăй бригадăри слесарьсемпе токарьсем — Черкасов, Чеботарев, Ефремов, Абросимов, Тарасов юлташсем васкавлă заданисене пурнăçламасăр цехран тухмастпăр, тенĕ.

Калана — тунă, вĕсем мĕнпур ĕçе вăрçă чухнехи пек йĕркепе пурнăçлама тытăннă.

Уйрăмăнах Коляганов, Введенский, Клинов, Байдулов, Николаев машинистсем лайăх ĕçленине палăртмалла.

Клиновпа Байдулов юлташсем пĕр паровоз çинче иккĕшĕ пĕрле ĕçлеççĕ. Вĕсем, çĕршывра чапа тухнă машинист Лунин меслечĕпе ĕçлесе, кăçалхи январь тата февраль уйăхĕсенче кăна 1324 тенкĕлĕх топливо перекетлесе хăварнă. Çавăн пекех Колягановпа Введенский машинистсем хăйсем ĕçлекен 708-26-мĕш номерлĕ паровозпа 1.114 тенкĕлĕх, Николаев машинист — 1.034 тенкĕлĕх топливо перекетленĕ.

Çĕршывра малта пыракан депосенчи машинистсем паровозсене хăйсемех ремонтлаççĕ. Вĕсен опычĕпе Бадеевпа Романов машинистсем ĕçре анлăн усă курма тытăнчĕç. Халĕ вĕсем нумай чухне хăйсен паровозне хăйсемех промывочнăй ремонт тăваççĕ, комплекснăй бригада валли паровоз хуранне юсас ĕçе çеç хăвараççĕ. Юлашки вăхăтра кунта паровозсем çинче ĕçлекен Васильев, Галимов тата Белоглазов машинистсем те паровозсене хăйсен вăйĕпех юсама тытăнчĕç.

Кунсăр пуçне депори машинистсемпе вĕсен помощникĕсем вăрçă кунĕсенче слесарь специальноçне вĕренсе çитрĕç. Халĕ пурĕ 45 çын слесарьсен стажне ĕçлесе иртерчĕç. Экзамен тăвакан комисси машинистсемпе вĕсен помощникĕсенчен чылайĕшĕ 5-мĕш, 6-мĕш разрядсемпе, хăшпĕрисем 7-мĕш разрядпа ĕçлеме пултарнине палăртрĕ.

Клиновпа Байдулов машинистсем хăйсен паровозне промывочнăй ремонт тунă хыççăн тепĕр ремонт тăвиччен 56.352 километр хушши илсе çÿретеççĕ. Çавăн пекех Колягановпа Введенский юлташсем те паровоза ремонтланă хыççăн тепре ремонтлаччен 30.000 километр хушши илсе çÿретес вырăнне 44.645 километр, Бадеевпа Романов 32.947 километр илсе çÿретрĕç.

Çакăн пек тÿсĕмлĕ паровозсене депори Черкасов юлташ ертсе пыракан комплекснăй бригада членĕсем юсаççĕ. Чеботарев, Абросимов, Ефремов слесарьсем тата Жигунов электросварщикăн мухтава тивĕçлĕ ĕçĕсем çинчен пĕтĕм çĕршыв пĕлет, вĕсен пархатарлă ĕçĕсем çинчен Совет Информаци Бюровĕ те пĕлтернĕ. Анчах черкасовецсем нихăçан та тунă çитĕнÿсемпе лăпланса лармаççĕ. Вĕсем халĕ май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, хăйсем çине çĕнĕ обязательствăсем илчĕç. Çав социализмлă ăмăртура илнĕ обязательствăсене пурнăçланă май, тылри паттăр-электросварщик комсомолец Сергей Жигунов мартăн 27-мĕшĕнче ĕç нормине 900 процент ытла тултарчĕ.

Хамăрăн тăван çĕршыва, хамăрăн Хĕрлĕ Çара пĕтĕм чĕререн юратса тăракан депори паровозниксемпе комплексниксем—тылри паттăрсем мĕнпур вăя хурса малашне татах та лайăхрах ĕçлеме шантараççĕ.

П. НИКОЛАЕВ.

АНГЛИН ДЕЙСТВУЮЩИ ФЛОЧĔ. Укерчĕк çинче: çĕнĕ линкор «Дюк оф Йорк», 35 пин тонна водоизмещениллĕскер, противникăн карапĕсем çине йывăр орудисенчен перет.

(Лондонран бильд аппаратпа панă).

Болгари правителĕсем Совет Союзне хирĕç авантюрăсем тума хатĕрленни çинчен „Таймс" хаçат çырса пĕлтерни

ЛОНДОН, мартăн 31-мĕш. (ТАСС). «Таймс» хаçат Болгари çинчен умстатья пичетлесе кăларнă. Вăл çапла çырать: София хулинчен официальнăй опровержениесем параççĕ пулин те, Борис патша Болгарие тĕнĕл держависене пăхăнтарас çулпа çĕнĕрен пысăк утăмсем туни пурнишĕн те курăнсах тăрать.

«Таймс» çакна кăтартса парать: премьер-министр Филов мартăн 28-мĕшĕнче парламентра тухса каланă хăйĕн сăмахĕпе София хулинчен тухакан опровержениесем мĕне тăнине нимĕн вăтанма пĕлмесĕрех кăтартса панă. Вăл çапла каланă: Болгария хăй мĕнле çулпа пырассине «татăклăнах суйласа илчĕ», Болгарин малашлăхĕ «Унăн союзникĕсен малашлăхĕпе нимĕн таталми çыхăнса тăрать, Болгарин малашнехи ырă кунçулĕсем «çĕнĕ йĕрке» туса хурас çинчен килеççĕ»,—тенĕ. Филов сăмахĕ пĕтĕмĕшпех халăх тахçанах пĕлекен гитлерла аргументсемпе тулнă, тĕслĕхрен, унта çапла каланă: Европăра килĕшÿллĕ общество тумалли условисенчен чи малтанхи услови вăл—«большевизма пĕтерсе лартасси», тенĕ; унтан тата çапла каланă тĕлсем пур: фашистла Германи тытса тăракан пулас «çĕнĕ йĕркешĕн» Совет Союзĕ пысăк хăрушлăх пулса тăрать, тенĕ. Ку ĕнтĕ çителĕклĕ таранах йÿçĕхсе кайнă апат-çимĕç, тесе çырать «Таймс», çавăнпа та Филов—Болгари халăхĕ мĕнпур кирлĕ жертвăсене пĕтĕмĕшпех тÿсме хатĕр,— тесе ĕнентерсе каланине Болгари çынисем сивлесе йышăннă. Çав шухăшкăмăлсем Болгари халăхĕн татах та вăйлăланса ÿсе пымалла, мĕншĕн тесен Филов сăмахне Берлинри комментаторсем хĕпĕртесех çакăн пек ăнлантарса панă: çуркунне çĕр çителĕкĕ типсе çитсен Гитлер Российăна хирĕç пуçарса яма хатĕрлевекен наступлени Болгари те пулăшасса шанчăклăнах ĕненсе кĕтсе тăма пулать, тенĕ çав комментаторсем.

Филов, ăна çывăх тăракансем тата çар пуçлăхĕсем,—тесе çырать малалла «Таймс»,—хăйсен çĕршывне тĕнĕл держависен кустăрмине кĕртсе лартнăскерсем, Болгарири обществăллă шухăшкăмăла вырăссене хирĕç кампани пуçласа ярас умĕн хăйсене кирлĕ пек çавăрса ярасшăн. Анчах та ун пек авантюра пирки Болгари халăхĕн тĕп сийĕ пулса тăракан тата çар валли тĕп кадрсем парса тăракан хресченсем пĕр ырă сăмах та калас çук.

Болгарири пăлханусем

ЛОНДОН, апрелĕн 2-мĕш. (ТАСС). «Рейнольдс ньюс» хаçат Болгарире Борис патшан правительствине хирĕç оппозицире тăракан çынсене массăллăн арестлени çинчен Бернран илнĕ пĕлтерÿсене пичетлесе кăларнă. Хаçат пĕлтернĕ тăрăх, нумаях пулмасть Болгарин премьер-министрĕ Филов парламентра Совет Союзне хирĕç сăмах тухса калас умĕн Болгарири чылай хуласенче темиçе вуншар çынна арестленĕ.

Болгари правителĕсем Совет Союзне хирĕçле тунă киревсĕр ĕçсем мĕнпур çĕршыври çынсене çавтери тарăхтарса янă. София хулинче, çавăн пекех тата ытти хуласенче те, пăлханусем пулса иртнĕ. София тата Сливен хулисенче халăхсен ушкăнĕсем Совет Союзне хирĕçле плакатсене татса антарса çура-çура тăкнă. Хасковăра икĕ полк, вĕсене темĕнле паллă мар çĕрелле ăсатасси çинчен приказ панă хыççăн, пăлханса кайнă.

ГИТЛЕРЛА ГЕРМАНИРЕ ХАЛĂХА ÇĂКĂР ВЫРĂННЕ ТĂХЛАН ПАРАÇÇĔ

СТОКГОЛЬМ, апрелĕн 2-мĕш. (ТАСС). Нумаях пулмасть Германире продовольстви нормисене, çав шутрах çăкăр памалли нормăсене те, чакарни нимĕç халăхне татах та хытăрах тарăхтарса янă: гитлерла пичет, халăха «лăпланма» тата тарăхнине палăртмасăр пурăнма чĕнсе, статья хыççăн статья пичетлесе кăларать. «Берлинер берзенцейтунг» хаçат, çынсем «нумайĕшĕсем нормăсене мĕншĕн çĕнĕрен чакарнă тата мĕншĕн çавтери нумай чакарнă» тесе ыйтнине хирĕç ответлесе, çапла çырать: «Йывăр хĕле тÿссе ирттернĕ хыççăн пирĕн продовольстви нормисене çĕнĕрен чакарма лекет. Паллах, çакă ĕнтĕ вăл килхуçи хĕрарăмĕсене, унччен те йывăрлăхсем тÿснĕскерсене, çĕнĕ чăрмавсем кÿрет. Продовольстви нормисене чакарни мĕнпур халăхшăн тем пек йывăр пулсан та, çавна ăна çине тăрсах тума лекет. Çывăх вăхăтсенчех татах та йывăртарах положение кĕрсе ÿкес мар тесен, çав ĕçе ниепле те ырана хăварма май килмен».

Çавăн пек «ăнлантарса пани» халăха татах та ытларах тарăхтарнине курса, гитлерăн хаçачĕсем кăмăлсăр çынсене, «пăтранчăк шывра пулă тытма пăхаканскерсене», хаяррăн юнаççĕ. «Дейче альгемейне цейтунг» хаçат çавнашкал çынсем тĕлĕшпе «драконла çирĕп мерăсем» йышăнма тÿрременех чĕнсе çырать. Германи правительстви «апатçимĕçе хурçă пек çирĕп йĕркепе тыткалассине» сиенлесе пыракан çынсене вĕлермелле тăвакан закон пичетлесе кăларнă.

Германин ялхуçалăхĕ пысăк йывăрлăхсем тÿсет

СТОКГОЛЬМ, апрелĕн 2-мĕш. (ТАСС). Германире тухакан хаçатсем час-часах çакна палăртса параççĕ: кăçалхи çул халăха апат-çимĕç продукчĕсем парса тăрасси пĕтĕмпех Германин ялхуçалăхĕнчен килсе тăрать, мĕншĕн тесессĕн «Украина çине шанмалли çук» теççĕ. Анчах та Германин ялхуçалăхĕ пысăк йывăрлăхсем тÿсет. Ĕç вăйĕ те, туртăм вăйĕ те, вăрлăх та, удобренисем те çитмеççĕ. Çураки ĕçĕсенче тыткăнри салтаксене тата ютçĕршывсенчен илсе пынă рабочисене ĕçлеттерни, гитлеровецсен хаçачĕсем каланă тăрăх, пысăк усă пама пултараймасть. Туртăм вăйĕ çитменнине тракторсемпе усă курнипе саплама май килмест, мĕншĕн тесессĕн горючи çук. «Берлинер берзенцейтунг» хаçат çапла çырать: «Горючи çитменнипе, хирти ĕçсенче чĕрĕ туртăм вăйĕ çук пулсан çеç тракторсемпе усă курăç», тет. Удобренисем те çитмеççĕ. «Удобренисем тăратасси вăрахлансан,— тесе çырать «Берлинер берзенцейтунг» хаçат,—вĕсемпе усă курмалли плана улăштармалла пулать вара». Хаçат удобренисене карточкăсем тăрăх парасси çинчен систерсе хурать. Нимĕçсем поляксен «генерал-губернаторстви» текен область çине хытă шанса тăраççĕ. Анчах ĕçсем унта та Германийинчен лайăх мар, начартарах пулсан çеç. «Кракауер цейтунг» хаçат çырнă тăрăх, Варшава округĕнчи поляксен именийĕсен управленин аллинче 234 шултра хуçалăх, пĕтĕмпе 70 пин гектар çĕр йышăнаканскерсем, тата темиçе пин вак хуçалăх пур, çаксен пĕтĕм çĕрĕ 15 пин гектар шутланать. Анчах та «çав хуçалăхсенчен нумайĕшĕ юхăнса кайнă, арканса пĕтнĕ».

Япони хаçачĕ Германири шалти лару-тăру çинчен мĕн çырать

ТОКИО, мартăн 31-мĕш. (ТАСС). «Джапан таймс энд Адвертайзер» хаçат «Иомиури» хаçатăн Берлинри корреспонденчĕн пĕлтерĕвне пичетлесе кăларнă. Корреспондент çырнă тăрăх, «Германире шалти лару-тăру çивĕчленнĕçемĕн çивĕчленсе пырать. Германири пурнăç условийĕсем çинчен каланă май корреспондент çапла çырать: «Ĕнтĕ пĕр эрне хушши Берлинри халăх хутмаллисĕр пурăнать, мĕншĕн тесен транспортри йывăрлăхсем пирки çĕркăмрăк турттарса килеймеççĕ». Корреспондент çавăн пекех тата Германири халăха хĕл каçиччен «тăксĕм хуйхă» пусарса тăнине палăртса хăварать.

Румынипе Венгри чиккинчи тытăçусем

СТОКГОЛЬМ, апрелĕн 2-мĕш. (ТАСС). «Свенска дагбладет» хаçатăн Берлинри корреспонденчĕ, Будапештран илнĕ хыпарсене кăтартса парса, çапла пĕлтерет: юлашки кунсенче Румынипе Венгри чиккинчи Трансильванире румынсемпе венгерсем хушшинче 64 хутчен тытăçусем пулса иртнĕ.

Англи самолечĕсем Булонь çине вĕçсе пырса тапăннă

ЛОНДОН, апрелĕн 1-мĕш. (ТАСС). Англин авиаци министерстви кăларнă коммюникере çапла каланă: бомбардировщиксен пысăках мар соединенийĕ истребительсем хÿтлесе пынипе апрелĕн 1-мĕшĕнче кăнтăрла Булоньри доксем çине вĕçсе пырса тапăннă. Противник зениткăй орудисенчен пенĕ, анчах унăн истребителĕсем хăшпĕрисем кăна сывлăшра вĕçсе хăпарнă. Англин пĕр бомбардировщикĕ пĕтнĕ, икĕ летчикран тăракан экипаж, аманнă пулин те, çăлăнса юлнă.

Югославире партизанла вăрçăн çулăмĕ ялкăшать

СТАМБУЛ, апрелĕн 2-мĕш. (ТАСС). Нимĕç захватчикĕсене тата Недичăн бандисене хирĕç кĕрешес ĕçре Югославири партизансем пысăк опыт туянчĕç. Уйрăм отрядсене пĕр-пĕринпе çыхăнтарас тата вĕсене тăтăшах хĕçпăшалсем, боеприпассемпе продовольстви парса тăрас ĕç лайăхланнăçемĕн лайăхланса пырать. Партизансем тусем çинче противника хирĕç малалла кĕрешсе пыма кирлĕ базăсем туса хунă. Партизансем уйрăмах Босни, Герцоговина тата Хорвати тăвĕсем çинче вăйлă çирĕпленсе ларнă.

Çуркуннехи операцисене тума хатĕрленсе, партизансем пуринчен ытла противникăн чĕрĕ вăйне пĕтерме тата çĕршывăн тĕп центрĕсем хушшинчи çыхăнăва пăсма тăрăшаççĕ. Юлашки икĕ уйăх хушшинче чугунçулсем çинче нумай сиен тунă. Çĕрпер паровозсемпе вагонсене ÿпĕнтерсе янă. Партизансем пыра-пыра тапăннипе сехрисем хăпнă оккупацилле влаçсен ирĕксĕрех поездсене çĕрле çÿреме чарса лартмалла пулнă. Белградпа Ниш хушшинчи чугунçул тăрăх вара, çула сыхламаллăн бронепоезд çÿрет. Нимĕçсем узловой станцисенче пуринче те бетонпа çирĕплетнĕ блиндажсем туса хунă тата орудисем вырнаçтарса лартнă.

Хальхи вăхăтра партизансем хресченсем хушшинче харпăр-хăйне кирлĕ чухлĕ çеç акăр тесе вăйлăн агитаци тăваççĕ. Çуркунне çывхарса килнĕ май партизансем активлăнрах кĕрешме тытăнчĕç. Тулли мар даннăйсем тăрăх, юлашки вăхăт хушшинче нимĕç салтакĕсемпе Недичăн салтакĕсене виçĕ пин çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Коман районĕнчи партизансен 80 çынран тăракан отрячĕ нимĕçсене хирĕç çапăçса 200 çынна ытла пĕтерсе тăкнă.

Хăшпĕр пысăк отрядсенче походнăй типографисем пур. Вĕсенче халăха чĕнсе калакан листовкăсемпе воззванисене, Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене тата Англи командованийĕн пĕлтерĕвĕсене пичетлесе кăлараççĕ.

Ютçĕршывсенче

● Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем хура списока тĕнĕл держависемпе çыхăнса тăракан фирмăсемпе уйрăм çынсене кĕртнĕ, Латинла Америкăра—5.365 фирмăна тата Португалире, Испанире, Швецире, Швейцарире тата Турцире — 2.073 фирмăна кĕртнĕ.

● Нью-Йорк районĕнче вăрттăн полици пĕр пысăк ушкăна арестленĕ. Çак ушкăнра тăракансем тĕнĕл держависем майлă пулса шпионла ĕçсем туса пурăннă тесе шутлаççĕ. Арестленĕ çынсене хĕçпăшал, çар снаряжени, фото тата радио аппарачĕсем, пропагандистла литература конфискациленĕ.

● Америка çыранĕсем çывăхĕнче Чилин грузсем турттаракан «Толтен» ятлă пароходне путарнă. Чилири рабочисен конференцийĕ правительствăран тĕнĕл держависемпе çыхăну тытма пăрахма тата парохода путаракансене хирĕç мерăсем йышăнма ыйтать.

● Индире çарта ĕçлес тĕлĕшпе «хĕрарăмсен вспомогательнăй корпусĕ» тăваççĕ. Хĕрарăмсене чи малтан штабсенче администрацине хуçалăх ĕçĕнче ĕçлеттерме шутлаççĕ.

● Азорски утравсем çине вырăнти гарнизона вăйлатма Португали государствин артиллери чаçĕсем çитнĕ.

● Нимĕçсен оккупацилле çарне тытса тăма Франция Германие кунсерен 400 миллион франк тÿлесе тăрать, вăл шутран 100 миллион франкне хаклă тăракан япаласемпе парса тăрать.

● Норвегире арестленĕ учительсен хисепĕ 1.000 çынна çитнĕ ĕнтĕ. Квислингăн халăха сутта кăларас ĕçпе культсен «министерстви» панă распоряжени тăрăх 9.000 учителе (урăхла каласан, пĕтĕм учительсен хисепĕнчен 85 процентне) ĕçукçи пама пăрахнă. Вĕсене ĕçукçине фашистла «учительсен союзне» кĕмен пирки тÿлемеççĕ.

● Ялхуçалăх министерствин даннăйĕсем тăрăх, 1941 çулта Китайра тĕштырă 98.700 пин пикуль пухнă, вăл 1940 çултинчен 31 миллион пикуль ытларах пулать.

„Пионер Чувашии" танк тума укçа пухаççĕ

ÇĔРПУ. Етĕрне хулинчи пионерсен пуçарăвне ырласа, районра «Пионер Чувашии» танк тунă çĕре пама укçа пухас ĕç сарăлса пырать. Паянхи куна Паварккассинчи туллимар вăтам шкул коллективĕ—210 тенкĕ, Патăрьелĕнчи туллимар вăтам шкул коллективĕ—180 тенкĕ, «Политотделец» колхозри колхозниксемпе колхозницăсем—100 тенкĕ пухса пачĕç.

«Пионер Чувашии» танк тунă çĕре пама укçа пухас ĕç Хĕрлĕ Тури, Лашсерти, хулари, Чуравăкри т. ыт. çĕрти шкулсенче те йĕркеллĕ пырать. Чылай шкулсенчи учительсем хăйсен пĕр кунхи ĕç укçине параççĕ.

* * *

СОВЕТСКОЕ. Изедеркăри туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем Етĕрне хулинчи пионерсен чĕнĕвне сÿтсе явнă хыççăн «Пионер Чувашии» танк тума 88 тенкĕ укçа пухрĕç.

Ф. ПЛАТОНОВ.

Ялхуçалăх машинисен пайĕсене 7.868 тенкĕлĕх пухнă

СĔНТĔР. Сталинград облаçĕнчи Иловлински машинно-тракторнăй станцинчи комсомолецсем чĕнсе калани çине районри çамрăксем ĕçпе ответлеççĕ. Апрелĕн 1-мĕш тĕлне районĕпе ялхуçалăх машинисен кивĕ пайĕсене пурĕ 7.868 тенкĕлĕх пухнă.

Запаслă пайсемпе детальсене пухас тĕлĕшпе уйрăмăнах МТС-ри комсомолецсем хастарлăн ĕçлерĕç. Яковлева Мария ертсе пыракан бригада мартăн 15-мĕшĕнчи воскресникре 38 деталь тата пĕр тонна тимĕр-тăмăр пухрĕ.

Пухнă детальсемпе тата тимĕр-тăмăрпа тракторсене, ялхуçалăх машинисене юсас ĕçре анлăн усă кураççĕ.

Г. АНДРЕЕВ.

25 бригада ĕçлет

СĔНТĔРВĂРРИ. Тракторсемпе ялхуçалăх машинисен кивĕ пайĕсемпе деталĕсене пухас тĕлĕшпе районра комсомолецсен 25 бригади ĕçлет. Вĕсем паянхи куна пурĕ 1960 деталь (14.130 тенкĕлĕх) пухнă. Вĕсенчен 130-ĕшне çĕнетсе машинăсем юсанă çĕрте усă курнă. Ку тĕлĕшпе машинно-тракторнăй станци çумĕнчи Степанов юлташ бригади пултаруллă ĕçлет.

Унсăр пуçне çамрăксем тимĕр-тăмăр пухас ĕçе те активлăн хутшăнаççĕ.

А. РАЗИН.

Совет Союзĕ тăрăх

Хĕрлĕ Çар ячĕпе уçнă выставка

Ереванра Хĕрлĕ Çар ячĕпе выставка уçăлнă. Выставкăна Арменири художниксем, скульпторсем, графиксем 60 çын хутшăннă. Унта 200 экспоната яхăн пухнă. Экспонатсем çинче отечественнăй аслă вăрçă эпизочĕсене илсе кăтартнă. (ТАСС).

Общественно-санитарнăй инспекторсене хатĕрлени

Мускав хулин сывлăх пайĕ организациленĕ курсра 6.000 çын общественно-санитарнăй инспекторсем пулма хатĕрленеççĕ. Вĕсен санитарнăй контролерсем пулса домоуправленисенче, учрежденисенче, предприятисенче т. ыт. те ĕçлемелле пулать. Вĕсем хушшинче 700 çынран ытла Хĕрлĕ Çар командирĕсен арăмĕсем. (ТАСС).

Стахановец-лунинец кабинечĕ

Амур çинчи Комсомольскри машиностроительнăй завод клубĕнче стахановец-лунинец кабинечĕ уçăлнă. Ку кабинетра стахановецсем вак-тĕвек ремонтсем тунă чух усă куракан инструментсен комплектне пухса кăтартнă, ĕçре час пĕтсе пыракан детальсене кăтартнă, вĕсене мĕнле майпа çĕнĕрен туса лартмалли çинчен ăнлантарса панă т. ыт. те. Çитес çывăх вăхăтрах кабинетра консультаци организацилесе çитереççĕ. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

КИНО-ТЕАТР
СУББОТА 4 АПРЕЛЯ
Концерт эстрады
ПРИ УЧАСТИИ ЛИЛИПУТОВ—
бр. АЛЕЙНИКОВЫХ и другие номера

ВОСКРЕСЕНЬЕ 5 АПРЕЛЯ
ВЕЧЕР РУССКОЙ НАРОДНОЙ ПЕСНИ И ПЛЯСКИ
В антрактах и по окончании
ТАНЦЫ
Начало в 11 часов вечера

ЧУВАШДРЕВПРОМСОЮЗУ
для работы в аппарате и системе
ТРЕБУЮТСЯ:
техники механической обработки дерева, техник-строитель, техник-механик, экономисты-плановики, бухгалтер-ревизор, главные и старшие бухгалтера.
Обращаться: гор. Чебоксары, ул. Заводская, 12.
Телефон 3—37 два звонка.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 1035. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6. 52 64 п. л.